1К6 К81Чув-2
А65
Ч-45006

Е. А. Андреева

# ХАЛЬХИ ЧĂВАШ ЧĔЛХИ
# СИНТАКСИС

Шупашкар 2005

Национальная библиотека ЧР
4-045006

ЛКБ К 81 Чув-2
А 65

Аслă професси пĕлĕвĕ паракан патшалăх вĕрентÿ учрежденийĕ
И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ

Чăваш чĕлхи кафедри

Е.А. Андреева

# *ХАЛЬХИ ЧĂВАШ ЧĔЛХИ СИНТАКСИС*

Вĕренÿпе методика пособийĕ

БИБЛИОТЕКА
Сергеева Леонида Павловича
600
и-45006

Шупашкар 2005

ББК 81.635.1–22 Я73
А – 655

И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн ăслăлăх канашĕ пичете çирĕплетнĕ

Редактор – филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ А.Е. Горшков доцент

Рецензентсем: филологи ăслăлăхĕсен докторĕ Л.П. Сергеев профессор, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ Л.Б. Пастухова доцент

Кĕнекере хальхи чăваш чĕлхи синтаксисĕн тĕп единицисене кĕскен таблицăсене вырнаçтарса панă, кĕретсĕр уйрăмра вĕренекен студентсем валли тĕрĕслев ĕçĕ çырмалли ыйтусене, тишкерӳ тумалли предложенисемпе текстсене, пĕлĕве тĕрĕслемелли тестсене çырса кăтартнă.

И-45006
©Андреева Е.А., 2005
©АПП ПВУ «И.Я. Яковлев ячĕллĕ ЧППУ», 2005
Национальная библиотека
Чувашской Республики

# УМĔН КАЛАНИ

Синтаксис – чĕлхе наукин пуплев епле йĕркеленни çинчен вĕрентекен пайĕ. Унăн хăйĕн ăнлавĕсемпе единицисем пур. Вĕрентӳ планĕнче палăртнă тăрăх, хальхи чăваш чĕлхи синтаксисне кĕретсĕр уйрăмри студентсен 5–6-мĕш курссенче вĕренмелле, тĕрĕслев ĕçĕсем çырмалла. 10–мĕш семестрта сăмах майлашăвĕпе хутсăр предложение, 11-мĕшĕнче хутлă предложение тишкерсе тĕрĕслев ĕçĕсене пурнăçламалла. Çакна тума çăмăлрах пултăр тесе вĕрентӳпе методика пособийĕнче синтаксисăн тĕп единицисене таблицăсене вырнаçтарса панă. Тĕрĕслев ĕçĕсене çырмалли ыйтусене палăртнă, вĕсене еплерех хурав памаллине тĕслĕхсем урлă ăнлантарнă. Ĕçе пурнăçланă чух пособире сĕннĕ кĕнекесемпе тата ăслăх статйисемпе усă курмалла. Кĕнекене харпăр хăй тĕллĕн тĕпчемелли текстсене, уйрăм предложенисене тата ăслăх ĕçĕсен кăтартмăшне кĕртнĕ. Вĕрентекен сĕннипе вĕсене суйлавлă тишкермелле, конспектламалла, синтаксисăн тĕрлĕ ыйтăвĕсене вĕреннĕ чух шута илмелле.

Юлашки вăхăтра пĕлĕве тестсем урлă тĕрĕслесси анлă сарăлчĕ. Çавна шута илсе кĕретсĕр вĕренекен студентсен пĕлĕвне хăвăрт хаклама май паракан хăш-пĕр тест тĕслĕхĕсене те сĕннĕ.

# СИНТАКСИСĂН ТĔП ЕДИНИЦИСЕМ

СИНТАКСИС – чĕлхе наукин пуплев епле йĕркеленни çинчен вĕрентекен пайĕ.

| Синтаксис единицисем | |
|---|---|
| **Сăмах майлашăвĕ** – пĕр ăнлавпа çыхăннă хăй пĕлтерĕшлĕ икĕ е темиçе сăмах пĕрлешĕвĕ. Унăн паллисем:<br>1) тулли пĕлтерĕшлĕ икĕ е ытларах сăмах forminчен йĕркеленет;<br>2) пайĕсем пăхăнуллă çыхăнура тăраççĕ;<br>3) вĕçленӳллĕ интонациллĕ пулмасть;<br>4) тулли тата тулли мар пĕлтерĕшлĕ сăмахсен пĕрлешĕвĕ сăмах майлашăвĕ пулмасть: *уяв чух, аннс валли.* | **Предложени** – вĕçленнĕ уйрăм шухăша палăртакан пĕр сăмах е сăмахсен пĕрлешĕвĕ. Унăн паллисем:<br>1) вĕçленнĕ уйрăм шухăша палăртать;<br>2) вĕçленӳллĕ интонациллĕ пулать; |

| Сăмах майлашăвĕн тытăмĕ | |
|---|---|
| **Ансăр сăмах майлашăвĕ** – хăй (тулли) пĕлтерĕшлĕ икĕ сăмах пĕрлешĕвĕ: *çăмламас упа, шурă юр, вăрмана кĕр, хаçат валли çыр.* | **Анлă сăмах майлашăвĕ** – хăй (тулли) пĕлтерĕшлĕ виçĕ е ытларах сăмах пĕрлешĕвĕ: *çавра çăкăр чĕлли, аслă урампа пыр.* |

| Анлă сăмах майлăшăвĕн тытăмĕ | | |
|---|---|---|
| № № | Сăмах майлашăвĕн тĕсĕ | Тĕслĕхсем |
| 1. | Тĕп пайĕ – сăмах майлашăвĕ, пăхăнулли – сăмах. | *çĕнĕ / чул çурт* |
| 2. | Тĕп пайĕ сăмах, пăхăнаканни – сăмах майлашăвĕ. | *çутă кăвак / тӳпе* |
| 3. | Тĕп пайĕ те, пăхăнулли те – сăмах майлашăвĕ. | *чăваш тĕррилĕ / пурçăн кĕпе* |

| Сăмах майлашăвĕн пайĕсене çыхăнтаракан грамматика хатĕрĕсем | | |
|---|---|---|
| 1. | Пайĕсен вырăнĕ-йĕрки – сăмахсем юнашар тăрса çыхăнни | *çутă ĕмĕт, шăнкăр-шăнкăр шыв, вичĕ çул, йывăç кĕреçе, ку кĕтес, шухăшласа калаç, çитме васка, йăл-йăл кулă* |
| 2. | Падеж аффиксĕсем [-ăн(-ĕн), -а(-е), -та(-те), -ра(-ре), -че, -ран(-рен), -тан(-тен), -чен, -па(-пе), -пала(-пеле), -палан(-пелен), -сăр(-сĕр), -шăн(-шĕн)] | *вăрманта пурăн, пӳлĕмрен тух, урамра выля, юлташпа калаç, чуна савăнтар, кăмпасăр таврăн, юлташшăн тăрăш* |
| 3. | Камăнлăх аффиксĕ [-ĕ(-и)] | *сĕтел ури, пӳрт кĕтесĕ* |
| 4. | Ытти аффикссем [-лă(-лĕ), -чен, -лăх(-лĕх), -ла(-ле), -серен, -ри(-ти,-чи), -хи] | *чечеклĕ улăх, кĕпелĕх пурçăн, çуллаччен пурăн, каçсерен тух* |
| 5. | Хыç сăмахсем [чух, хыççăн, çĕре, валли, çинчен, умĕн, пирки, тĕле, евĕр, пек, май] | *юлташ валли ил, çумăр хыççăн тух, çиле май пыр, кино пирки калаç, ултта тĕлне пыр, ман çинчен кала, улăп пек паттăр, аслати евĕр сасă* |

## Хутсăр предложени

| Предложенисене каланин тĕллевне кура ушкăнлани | | | |
|---|---|---|---|
| Ыйтуллă предложенисем | Ыйтусăр предложенисем | | |
| Мĕн çинчен те пулин ыйтнине пĕлтереççĕ: *Эсир чăваш халăхĕн паянхи ĕç-хĕл, ăс-хакăл, культура шайне мĕнле хакланă пулăттăр?* | Калуллă предложенисем мĕн çинчен те пулин каласа параççĕ: *Тин кăна вăраннă хĕвел çĕр питне ăшшăн çупăрларĕ.* (М.Андреева.) | Хистевлĕ предложенисем мĕн те пулин тума хистеççĕ: *Илсе çÿре-ха пире, хаклă Кирилл Константинович, тепĕр хут авалхи Греци çĕр-шывĕ тăрăх, Египет фараонĕсем çинчен каласа кăтарт.* (П.Афанасьев.) | Ĕмĕт, сунăм пĕлтерĕшлĕ предложенисем *Эс килессе пĕлсессĕн хапха умне тухăттăм, пирĕн тĕле çитсессĕн хирĕç утса пырăттăм.* |

| Предложенин тĕп членĕсем | |
|---|---|
| Подлежащи – предложенири ***кам? мĕн?*** ыйтура тăракан, ĕçĕн субъектне палăртакан тĕп член. *Чи çÿллĕ тусен тăррине çил йăва çавăрнă, ĕмĕрсем хушши унта пурăнса чулсене якатса янă, шăтарса кĕнĕ.* (Ю.Скворцов.) | Сказуемăй – подлежащи ĕçне е пĕр-пĕр паллине кăтартса ***мĕн тăвать? мĕн вăл? кам вăл? вăл мĕнле?*** т. ыт. ыйтусенче тăракан тĕп член. *Сайра хутра çеç пĕлĕт ăшĕнчен юмахри хуп-хура хĕвел пек ту тăрри кăшт пăхса илет те каллех çухалать.* (Ю.Скворцов.) |

| Подлежащи пулăвĕ | | |
|---|---|---|
| № № | Хăш пуплев пайĕсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
| 1. | Япала ячĕ | *Хура* аист – *вăрманта вăрттăн пурăнакан чарлан пек кайăк.* (Н.Сладков.) |
| 2. | Местоимени | *Çак кунран пуçласа* эпĕ *пĕр тĕпрен ÿсекен икĕ шурă хурăна яланах тимлесе сăнама тытăнтăм.* (Г.Ефимов.) |
| 3. | Паллă ячĕ | *Çăкăртан* асли *те çук,* *Çăкăртан* хакли *те çук.* (В.Пр.) |
| 4. | Хисеп ячĕ | *Тĕркĕшнĕ май утă лавĕ çинчен* иккĕшĕ *те шуса анчĕç.* (В.Алентей.) |
| 5. | Глаголăн сăпатсăр формисем (причасти, инфинитив) | Тăрăшни *нихăçан та сая каймасть çав.* (В.Алентей.*);* Касма *çăмăл,* ÿстерме *йывăр.* Илесси *çăмăл,* парасси *йывăр.* (Ват.сăм.) |
| 6. | Еврлев сăмахĕ | Шăмпăрр! *илтĕнсе каять шăплăхра.* (Г.Ефимов.) |
| 7. | Сăмахсен пĕрлешĕвĕ | *Унтан* Каврушпа Карачăм *иккĕшĕ те йывăç тураттисем çине улăхса утлана-утлана ларчĕç.* (Д.-Чалтун.) |

| Сказуемăй пулăвĕ | | |
|---|---|---|
| № № | Хăш пуплев пайĕсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
| 1. | Сăпатлă формăри глагол | *Çерем çинче пĕр хура курак ушкăн шăнкăрч хушшинче уткаласа* çÿрет. *Кисловодскпа сывпуллашнă май Зиновий юлашки хут турбаза кил картине* кĕчĕ. (Ю.Скворцов.) |
| 2. | Сăпатсăр формăри глагол (причасти) | *Усала хирĕç ман ятпа çирĕппĕн* тămалла. (Г.Ефимов.) *Кĕçĕр иккĕшĕ те чĕнтĕрлĕ шурă кĕпе* тăхăннă, *симĕс* |

| | | |
|---|---|---|
| | | *саппун* çакнă, *шурă тутăр* çыхнă. (А.Артемьев.) |
| 3. | Япала ячĕ | *Тăри – вĕçĕмсĕр кăвак инçете юратакан* кайăк. (В.Алентей.) *Ашшĕ вăрăм сăмсаллă шурă* карттуспа. (И.Егоров.) |
| 4. | Хисеп ячĕ | *Ăмăртура мала тухакансем* – виççĕмĕшсем. *Акă эсĕ* çирĕмре. (Ст.Лашман.) |
| 5. | Евĕрлев сăмахĕ | *Кушак тяппи* тяп-тяп. (Чăв.хал.сăм.); *Çаран* – ян! та ян! (В.Энтип.) |
| 6. | Местоимени | *Паян класра дежурнăй* эсĕ. *Ку кĕнеке* манăн. |
| 7. | Сăмахсен пĕрлешĕвĕ | *Манăн та пусăрăнчăк кăмăл* çĕкленме пуçларĕ. *Уншa çуммăн тăрса кăшт* çамрăкланса кайрăм-ши? (И.Егоров.) *Çил* çукпа пĕрех. *(В.Алентей.)* |

## Предложенин кĕçĕн членĕсем

| Определени – япала ятне ăнлантаракан кĕçĕн член: *Зиновн ури айĕнче* вĕтĕ *чулсем юхса шăкăртатрĕç.* (Ю.Скворцов.) | Дополнени – ĕçе е мĕнлелĕхе кăтартакан сăмаха ăнлантарса падеж ыйтăвĕсенче тăракан кĕçĕн член: *Çирĕклĕх* шывне *вăрăм çўç пек усăнакан туратлă çирĕксем хупласах хунă.* (Ю.Скворцов.) | Обстоятельство – ĕç мĕнлелĕхне, вăхăтне, вырăнне, сăлтавне, тĕллевне т.ыт.те кăтартакан кĕçĕн член: Урамра *чечек шăваракан хĕрсем çеç тулли лейкăсем* йăтса газонсем хушшипе *утаççĕ.* (Ю.Скворцов.) |
|---|---|---|

| Определени пулăвĕ | | |
|---|---|---|
| № № | Хăш пуплев пайĕсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
| 1 | Япала ячĕ | *Кайăк юрриллĕ вăрман* çынсен *савăнăçĕпе янăрать.* (Г.Ефимов.) |

| | | |
|---|---|---|
| 2. | Паллă ячĕ | *Хурчка аçи йăвине çӳллĕ йывăç тăррине вырнаçтарать. (Н.Игнатьев.)* |
| 3. | Хисеп ячĕ | *Петюкпа пĕрле* пĕр *тĕпрен ӳсекен* икĕ *хурăн патне кайса килтĕмĕр.* (Г.Ефимов.) |
| 4. | Местоимени | Хамăрăн *ачалăха аса илме каникулсенче хурăнсем патне кайса килеттĕмĕр.* (Г.Ефимов.) Леш *чăрăш йĕкелĕ вара ку таранчченех* манăн *сĕтел çинче выртать.* (Н.Сладков.) |
| 5. | Евĕрлев сăмахĕ | Пăлтăр та пăлтăр *пултăранăн*<br>*Папка та ярас вăхăчĕ.*<br>*Ан çилленĕр, ваттисем,*<br>*Выляс-кулас та вăхăчĕ.* (Хал. юрри.) |
| 6. | Сăпатсăр формăри глагол (причасти) | Тытас *чĕр чуна асăрхасан хăлат çĕр çинелле урисене малалла тăсса чул пек ӳкет.* (Н.Игнатьев.) *Турат çинче* ларакан *кайăк çумран вĕçсе* иртекен *хурт-кăпшанка сывлăшра* тытать. (Н.Игнатьев.) |

| Дополнени пулăвĕ | | |
|---|---|---|
| №<br>№ | Хăш пуплев пайĕсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
| 1. | Япала ячĕ | *Урама тухсанах сивĕ* пите *çулăм пек пĕçертсе илет.* (В.Алентей.) |
| 2. | Паллă ячĕ | *Ӳлăхра курсан чечек*<br>*Ешĕл çуркунне.*<br>*Ан васка эсĕ татма*<br>*Чи* илемлине. |
| 3. | Хисеп ячĕ | *Илюк шкулта аван вĕреннĕ, уроксенче яланах* «тăваттă» *та* «пиллĕк» *илнĕ.* (Л.Агаков.) |
| 4. | Местоимени | *Сĕве кукринчĕ миçе пулăç ларать!* Кашнин *вăлта яма ятарласа тунă çур утрав пур.* (А.Кăлкан.) *Кĕре хирĕç уйрăмах хĕрӳ вăхăт пуçланать* |

| | | |
|---|---|---|
| | | унпăн. (Ю.Силэм.) |
| 5. | Глаголăн сăпатсăр форми (причасти) | *Валентин вара халтан кайиччен ĕçлерĕ, пурпĕр* ывăннине *кăтартасшăн пулмарĕ...*(А.Артемьев.) |

| Обстоятельство пулăвĕ | | |
|---|---|---|
| № № | Хăш пуплев пайĕсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
| 1. | Япала ячĕ | Тӳпере *тăрисем мĕн тери янăравлăн, мĕн тери хĕпĕртесе юрă шăрантараççĕ.* (В.Алентей.) |
| 2. | Паллă ячĕ | *Униççе карчăк пӳрчĕн чӳрече кантăкĕ* шап-шурă *шăннă.* (В.Алентей.) |
| 3. | Хисеп ячĕ | Çиччĕ *виç те* пĕрре *кас.* (Ват. сăм.) |
| 4. | Местоимени | Темпĕн *шăпах çак лĕпĕш канăç памасть мана.* (Н.Сладков.) Анчах тăххăрта *кил вара.* (В.Игнатьев.) |
| 5. | Наречи | Кăçал *кĕрт тарăн çав.* |
| 6. | Еверлев сăмахĕ | *Бухгалтер сĕтел умне хуллен утса пычĕ те* ярт *тăсăлса тăчĕ.* (В.Алентей.) *Ĕне кăна витинче* кăмпăрт-кăмпăрт *тутарса утă çиет.* (Г.Ефимов.) |
| 7. | Глаголăн сăпатсăр форми (деепричасти, инфинитив) | *Хĕллехи йăвинчен хĕвел çинче хĕртĕнме мăнтăркка пурăш* йăраланса *тухать.* (Н.Сладков.) *Лăпкă çанталăкра тӳперен çаврăнса анакан юр пĕрчисене* сăнама *ытла та лайăх.* (В.Алентей.) *Савăнăç вăл кулленхи ĕç-пуçсем хушшипе* систермесĕр *килет.* (Г.Ефимов.) |

Обстоятельствăсен ушкăнĕсем

| №/№ | Пĕлтерĕш ушкăнĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. | Мĕнлелĕх обстоятельстви | *Малти вар шырланĕнче карласа юхакан çурхи шыв сасси чӳречерен* шăппăн-шăппăн *илтĕнет.* (К.Чулкаç.) |
| 2. | Вырăн обстоятельстви | *Хаяр, арăш-пирĕш çанталăкра эпĕ* наряда *уйрăмах кăмăллăн каят-* |

| | | |
|---|---|---|
| | | *тăм.*(В.Алентей.) |
| 3. | Вăхăт обстоятельстви | *Юпа уйăхĕнчи юр* çĕрле *е* ирхине *шўсе çемçелнĕ çĕр питне тăрăшсах шурă пĕркенчĕкпе витет.* (М.Кипек.) |
| 4. | Пирке обстоятельстви | *Çапла вăрман тăрăх аташса çўресен-çўресен* канма *лартăм.* (В.Алентей.) |
| 5. | Виçе обстоятельстви | Ч*ўк уйăхĕнчи юр вара* часах *ирĕлсе пĕтмест, хăш чух икĕ-виçĕ эрне хушши ура айĕнче кăчăртатса* выртать. (М.Кипек.) |

| Хутсăр предложенисене тĕп членĕсем пуррипе çуккине кура ушкăнлани | | |
|---|---|---|
| №№ | Предложени тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
| 1. | Икĕ тĕп членлă предложенисенче тĕп членĕсем иккĕшĕ те пулаççĕ. | *Шăнкăр-шăнкăр çăлкуççен шĕлтĕртетĕвне тăнласа яштака* хурăнсем *ухăна-ухăна ачаш шевлепе* вылянă. (Н.Ильин.) |
| 2. | Пĕр тĕп членлă предложенисенче тĕп членсенчен пĕри çеç пулать. | *Паян тумалли ĕçе ырана* ан хăвар. (Ват.сăм.) |

| Пĕр тĕп членлă предложенисем | | |
|---|---|---|
| №№ | Предложени тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
| 1. | Подлежащисĕр предложенисем | Калаçасчĕ *ман çынпа пĕрре тăватпилĕк çул каяллахи пек – çак ăшăмри хăватсăр, чунтан.* (Ю.Скворцов.) |
| 2. | Сказуемăйсăр предложенисем | *Хурама çулçи пек çулçăллă, пысăк кĕрен сапакаллă* каштансем...(Ю.Скворцов.) |

| Подлежащисĕр предложенисем | | |
|---|---|---|
| №№ | Предложени тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
| 1. | Паллă мар сăпатлă | *Мухтавлă хĕре кĕмĕл медаль* |

| | | |
|---|---|---|
| | предложенисем | памалла тунӑ. (А.Артемьев.) |
| | | *Ватӑ ҫерҫие хывӑхпа* улталаймӑн. *Тытман упа тирне* ан сӳ. (Ват.сӑм.) |
| 2. | Сӑпатсӑр предложенисем | *Тем пекех* таврӑнас килнӗ *унӑн тӑван ҫӗр-шывне.* (А.Артемьев.) |
| | | *Уйра* шӑп. (Х.Уяр); *Пӳртре* таса, ҫутӑ. *(Илпек М.)* |
| | | Тӗттӗмленсе ларчӗ ӗнтӗ (А.Артемьев.); *Каҫпа Ухтивана* пӗҫертсе пӑрахрӗ. (Х.Уяр.) |

| Сказуемӑйсӑр предложенисем | | | |
|---|---|---|---|
| №№ | Предложени тӗсӗсем | Тӗп членӗ | Тӗслӗхсем |
| 1. | Ят предложенисем (япала ячӗпе ун ушкӑнне кӗрекен сӑмахсем ҫеҫ пулаҫҫӗ). | Япала ячӗ | *Ту ҫинче ҫеҫ пулакан янкӑртан та янкӑр, кӑн-кӑвак* тӳпе. *Кисловодскра ҫеҫ пулакан пӗр сулӑм ҫилсӗр* сывлӑш.(Ю.Скворцов.) |
| 2. | Предложенире япала ячӗн ушкӑнне кӗмен сӑмахсем те пулаҫҫӗ (тулли мар предложени). | Япала ячӗ | *Тавра курӑм хӗрринче – капмар пӗлӗт пек купаланса тӑракан ӗмӗр ирӗлми пӑрлӑ* тусем. (Ю.Скворцов.) |

Тулли мар предложени тесе пӗр-пӗр сиктерсе хӑварнӑ члена ҫӑмӑллӑнах кӗртсе лартма май пур предложение калаҫҫӗ.

| Тулли мар предложенисем | | |
|---|---|---|
| № | Тулли мар пред- | Тӗслӗхсем |

| № | ложенисен тĕсĕсем | |
|---|---|---|
| 1. | *Тулли мар* предложенири сиктерсе хăварнă сăмахсем текстран е каласуран паллă. | –*Ку сирĕн мĕнле ял пулчĕ?* –Куракьелĕ. –*Унта ситме мисе сухрăм пулать?* –Виссĕ. (Х.Уяр.) |
| 2. | Хутлă предложенин пĕр пайĕ *тулли мар* пулма пултарать. | *Кус хитрине юрататъ,* тута – тутлине. (Ват.сăм.) |
| 3. | Юнашар тăракан уйрăм хутсăр предложенисем шухăшĕпе тачă сыхăннă чух *тулли мар* пулма пултарассĕ. | *Акă пристань. Каччă чунне лăплантарас тесе пристане тухмарĕ.* Каютăрах кусне хупса ларчĕ. *(Юхма М.)* |
| 4. | Хăш-пĕр *тулли мар* предложенисенче ĕсне тăваканни глагол сăпатĕнчен паллă пулнипе подлежащине каламасăр хăварассĕ. | *Эх,* пыраттăмăр *вара сапса сăвакан сумăра хирĕс.* (В.Алентей.); *Касса* илетĕн *те пĕр-пĕр якарах турата шаккаса шанкине ўкеретĕн, пулас шăхлич валли хуппинчен чĕлĕх* тăватăн. (А.Емельянов.) |

**Кăткăсланнă предложенисем**

Предложенисем пĕр йышши членсемпе, уйрăм тăран членсемпе, кўртĕм конструкцисемпе, чĕнўсемпе кăткăсланма пултарассĕ.

| Пĕр йышши членсем – ытларах чухне пĕр ыйтурах тăракан, предложенин пĕр членĕпе сыхăнакан сăмахсем | | |
|---|---|---|
| №<br>№ | Предложени членĕ | Тĕслĕхсем |
| 1. | Подлежащи | *Яштак* чиесем, *сĕмĕрт* йывăссисем, *сатрака туратлă* улмуссисем *шап-шурă тумпа витĕннĕ.* (Л.Агаков.) |
| | | |

| | | |
|---|---|---|
| 2. | Сказуемăй | Шавлать, кашлать *сĕм вăрман.*(К.Иванов.) *Юратнă кĕтесĕм çамрăклăх* пиллерĕ, *ĕçе* хăнăхтарчĕ, *ĕçре* пиçĕхтерчĕ, *пурнăç сукмакĕ çине* кăларчĕ. («Ком. ялавĕ.») |
| 3. | Определени | Чухăнлăх, пуянлăх, уйрăмлăх *йăранĕ ирĕкпе çĕнелнĕ пурăнăçран тарĕ.* (Çеçпĕл М.) |
| 4. | Дополнении | Валем, купа, капансем *лартса тухрĕç сарлака улăх варрине. Пурăш ўсентăрансен* тымарне те, хурт-кăшпанка та, ăмана та, шăшие те, шапана та *юратса çиет.* (Х.Уяр.) |
| 5. | Обстоятельство | *Хура аист сулхăнра кăна хура курăнать, хĕвел çинче* симĕссĕн, кăваккăн, йăм хĕрлĕн *йăлтăртатать.* (Н.Сладков.) |

| Пĕр йышши членсен çыхăнăвĕ | |
|---|---|
| Союзсăр çыхăну | Союзлă çыхăну |
| Мĕн ĕлĕкрен пирĕн măн асаттесем ўсен-тăрансен уссине пĕлсе тăнă, вĕсемпе тĕрлĕ чир-чĕртен сипленме пĕлнĕ. (О.Ефимов.) | *Вăл е сăлтавсăрах ахăлтатса* кулса ярать, е *тата кунĕкунĕпех пĕр чĕнмесĕр тарăн* шухăша кайса ларать. (П.Афанасьев.) |

| Пĕр йышши членсем союзсемпе çыхăнни | | |
|---|---|---|
| Сыпăнуллă союзсем | | Тĕслĕхсем |
| Сыпăнтаракан | Та (те) | *Шкул ачисем ирхи апат* çирĕç те *кĕнекесем илсе садри йăрăс тирексем айне тухса* ларчĕç. (Г.Ефимов.) |
| | Тата | *Е.В. Владимиров – паллă* критик, тĕпчевçĕ, сăмах ăслăлăхĕсен тухтăрĕ тата педагог. (А.Мефодьев.) |

| | | |
|---|---|---|
| | Ни | *Çак* **ни вырăс, ни чăваш** *хĕр ачин калаçăвĕ юлташсем хушшинче чыса та, мăнкăмăллăха та ÿстеретчĕ.* (П.Афанасьев.) |
| **Хирĕç-лекен** | Анчах | *Вăл хăлхине тăратса* **итлет, анчах** *калаçăва* **хутшăнмасть.** (Х.Уяр.) |
| | Çапах | *Юман темĕн те* **тÿсет, çапах** *çÿлеллех* **ÿсет.** (А.Артемьев.) |
| | Унсăрăн | *Оленька яланах кама та пулин* **юратать, унсăрăн** *пурăнма та пултарай-масть.* (А.Чехов.) |
| | Ахальлĕн | *Юрать-ха* **тухрăм, ахальлĕн** *сана та* **кураймастăм.** (А.Лазарева.) |
| **Уйăр-акан** | Е-е | *Вăл кăнтăрла* **çывăрать е** *Атăл хĕрне* **анать.** *Çынсене курсан вăл* **е пăрăнса утать, е** *çĕрелле пăхса* **иртсе каять.** (Х.Уяр.) |
| | Пĕрре-тепре | *Хĕр Зинови умĕнче ĕçне пăрахсах пуç тутрине* **пĕрре** *хытарса* **çыхнă пек, тепре** *пушатнă* **пек куçаркаларĕ.** (Ю.Скворцов.) |
| | Пĕр-пĕр | *Сÿс хÿреллĕ хурçă йытă* **пĕр кĕрет те пĕр тухать.** (К.Иванов.) |
| | Те-те | **Те кулать, те макăрать** *вăл – уйăрса илеймерĕм.* (В.Петров.) |
| **Пăхăну-ллă со-юзсем** | Пулин те, пулсан та | *Уйăх çутатать пулин те,* **ăшăтмасть.** (Ват. сăм.) *Пилеш çиме йÿçĕ пулсан та, усăллă.* |

| **Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсем хушшине чарăну палли лартасси** | | | |
|---|---|---|---|
| **Запятой** | **Тире** | **Икĕ точка** | **Точкăпа запятой** |
| Пĕр йышши членсем пĕр еверлĕрех япаласене, пулăмсене, ĕç-хĕле сăнлаççĕ пул- | Пĕр йышши членсем пĕр-пĕрне хирĕçле пĕлтерĕшлĕ пулсан вĕсем хушшине тире | Пĕр йышши членсенчен пĕри пĕлтерĕшĕпе ыттисенчен анлăрах пул- | Анлă пĕр йышши членсем хушшине точкăпа запятой лартаççĕ: |

| | | | |
|---|---|---|---|
| сан вёсене запятой лартса уйăраççĕ: | лартаççĕ: | сан ун хыççăн икĕ точка лартаççĕ: | |
| Упасем, пурăшсем, чĕрĕпсем *çуркуннеччен пĕр вăранмасăр шăтăкра сывăраççĕ.* (Н.Сладков.) | *Мулкачсем, пăшисем, кашкăрсемпе çӳлевĕçсем юр вителĕк çинех* выртаççĕ-чирлемесçĕ.(Г.Орлов.) | *Çав хушăра хуçа часрах мĕн тумаллисене* тума васкать: *ăнакăна* илсе кĕрет, *апат лартса* парать. (Х.Уяр.) | *Акă вăл, тем асăрханă пек, аяккалла* чăмрĕ *те самантрах çӳлелле çĕкленсе инçех мар ӳсекен хыр турачĕсен хушшинче* çухалчĕ; *унтан тепĕр йĕкел йăтса тухса каллех хăйĕн кивĕ вырăнне, тăрри хуралнă хыр çине,* таврăнчĕ. (Г.Орлов.) |

Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем – пĕлтерĕшĕ енчен пĕр йышши членсене пĕтĕмлетекен сăмахсем. Вĕсем пĕр йышши членсемпе пĕр ыйтура тăраççĕ, предложенин пĕр членĕпе çыхăнаççĕ.

| Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсене чарăну паллипе уйăрасси | | |
|---|---|---|
| №№ | Пĕтĕмлетӳ сăмахĕн вырăнĕ | Тĕслĕхсем |
| 1. | Пĕр йышши членсем умĕнче тăракан пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ. | Мĕнпур *тавралăх вуншар тĕслĕ катрамран тăрать тейĕн: ешĕл калча, йăмăх хура çул, сарă-хĕрлĕ çулçăсем, тĕк пек шурă çăмăл пĕлĕтсем*...(П.Афанасьев.) |

| | | |
|---|---|---|
| 2. | Пĕр йышши членсем хыҫĕнче тăракан пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем умĕн тире лартаҫҫĕ. | *Вĕсем хушшинче тăхран, сар пăрчкан, кĕпшĕл, сăнчас, шăлинкурăс, пуса та майра кайăкĕсем* – йăлтах *пур пулас.* (Ю.Скворцов.) |
| 3. | Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем пĕр йышши членсем умĕн тăнă чух предложени вĕҫленмест пулсан умĕн икĕ точка, хыҫҫăн тире лартаҫҫĕ. | *Хĕлле пур* йываҫ та: *юман та, ҫăка та, хурăн та* – пурте *шап-шурă юр айĕнче.* (Н.Сладков.) |

| Предложенири интонаципе уйрăмлатнă сăмахсем | | |
|---|---|---|
| №№ | Уйрăмлатнин сăлтавĕсем | Тĕслĕхсем |
| 1. | Интонаципе уйрăмлатни предложенири сăмахсен ҫыхăнăвне тĕрĕс палăртма май парать. | *Пуҫсем тăрринче,* тĕнче пĕтнĕ пек, *ҫил кĕрлет-ахăрать, алă тăратсан алла касса каяссăн туйăнать.* (Х.Уяр.) |
| 2. | Интонаципе уйрăмлатакан сăмахсем хăйсем умĕнчи сăмахсен пĕлтерĕшне уҫса параҫҫĕ, тĕрĕслетсе кăтартаҫҫĕ. | *Вăл утланнă лашана тӳнтер кĕрĕк тăхăнса хăратнă ача,* Ваҫук тусĕ, *ун патне халь ура ярса та пусман.* (Х.Уяр.) |
| 3. | Интонаципе уйрăмлатни ҫеҫ пĕр сăмаха тепринпе ҫыхăнма май парать. | *Пĕр ҫын кăна* – кукамай – *хăйĕн пурнăҫ тĕрĕслĕхĕпе, йывăр шăпипе ман кăмăлтуйăма, ăс-пуҫа нумай пуянлатрĕ.* (В.Петров.) |

| Уйрăмлатнă сăмахсен ҫыхăнăвĕ. | | |
|---|---|---|
| № № | Предложенин хăш членĕпе ҫыхăнать | Тĕслĕхсем |
| 1. | Подлежащипе (е унăн ушкăнĕпе) | Микка, пĕрмаях чир-чĕрпе асапланаканскер, *пит имшеркке ӳсет.* (С.Аслан.) |
| 2. | Сказуемăйпа (е унăн ушкăнĕпе) | *Лида кĕнекесем, тетрадьсем хурса тултарнă сĕтел умĕнче* тăрать – хура вăрăм платйĕпе, кăвак тутăрпа. (А.Артемьев.) |



Национальная библиотека
И-45006
Чувашской Республики

| | | |
|---|---|---|
| 3. | Дополненипе (е унăн ушкăнĕпе) | *Çав çăкăр-тăварпа сĕтел хушши* пире, ватăсене, *яланах хапăл пултăр.* (Г.Ефимов.) |
| 4. | Обстоятельствăпа (е унăн ушкăнĕпе) | Ту сĕвеклĕхĕнче, йăмрапа хурăнсен сулхăнĕнче, *чĕркĕмĕл пек шăнкăртатса юхать шурă чул айĕнчен тапса тăракан çăл* шывĕ. (Г.Ефимов.) |

**Уйрăмлатнă сăмахсене чарăну паллисемпе уйăрасси**

| №№ | Чарăну палли лартасси | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. | Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой е тире лартса уйăраççĕ. | *Чикĕ леш енчи мул хуçисен тарçисем* – наркăмăш чĕлхеллĕ сутăнчăк çыравçăсем – *пиртен куçăнах мăшкăллатчĕç.* (А.Эсхел.) *Ухтиван килтен тухса кайнă çулхи кĕркунне,* пĕр тĕттĕм каçхине, *Ярилле старик уй* варрипе *ялалла юрттарса* пынă. (Х.Уяр.) |
| 2. | Хăш чухне шухăш уçăмлăхĕшĕн предложенин пĕр-пĕр сыпăкне умĕнхи сăмахсенчен уйрăмлатса каланă чух çав сыпăк умне тире лартаççĕ, хыççăн нимĕн те лартмаççĕ. | *Чирлĕ Хветуç* хăйĕн ывăлĕсем – хăйĕн телейĕ *çине пăхса пĕр-икĕ хутчен вăйсăррăн кулса илчĕ.* (Л.Агаков.) |
| 3. | Тепĕр чух предложенин сыпăксене интонаципе уйрăмлатса та, уйрăмлатмасăр та калама юрать. Унашкал сыпăксене чарăну паллипе уйăрсан та, уйăрмасан та юрать. | *Вăрман урлă каçнă чух Çемене хăйсен кӳршĕ хĕрарăмĕ,* Варук инке, *пушă лавпа хуса çитрĕ.* (А.Артемьев.) |

## Кӳртĕм сăмахсемпе предложенисем

Калаканĕ хăйĕн шухăшне мĕнле хакланине (çирĕплетнине, иккĕленнине, кăмăлланине т.ыт.те.) палăртакан сăмахсене кӳртĕм сăмахсем теççĕ.

| Кӳртĕм сăмахсен пĕлтерĕшĕ | | |
|---|---|---|
| №№ | Пĕлтерĕшĕсем | Тĕслĕхсем |
| 1. | Калаканни хăй шухăшĕ çине епле пăхни (çирĕплетни, иккĕленни, кăмăллани т.ыт. те) | Тен, *вăл аслисенчен те ытла ĕçлет пуль.* (Х.Уяр.) Шел, *сурăхĕ лайăхчĕ: улаччĕ, йăвашчĕ, кĕтӳрен таврăннă-таврăнман Палюк аллине пырса шăршлатчĕ.* (Х.Уяр.) |
| 2. | Шухăша пĕтĕмлетнине палăртни | Тӳррипе каласан, *аслă тухтăрне те мĕн те пулин памаллаччĕ ĕнтĕ.* (Х.Уяр.) |
| 3. | Шухăш йĕркине палăртни | *Валентин паян калама çук телейлĕ, мĕншĕн тесен,* пĕрремĕшĕнчен, *вăл халĕ çак ирĕклĕ çĕр çинче,* иккĕмĕшĕнчен, *хăйĕн юратнă ĕçне тума пултарать.* (А.Артемьев.) |
| 4. | Сăмах е шухăш камран тухнине палăртни | Эп астăвасса, *Шупашкар урамĕнче пĕр харăс икĕ-виçĕ çынран ытла çӳреместчĕ...* (Х.Уяр.) |

| Кӳртĕм сăмахсемпе предложенисене чарăну паллипе уйăрасси | | |
|---|---|---|
| №№ | Чарăну палли лартасси | Тĕслĕхсем |
| 1. | Сказуемăй умĕн тăракан кӳртĕм сăмахсене запятойпа уйăраççĕ. | Чăн та, *иксĕмĕр те çамрăк, пурнăç тĕпелне иртсе курман, ун кĕрекине ларса курманха.* (А.Артемьев.) |
| 2. | Сказуемăй хыççăн унпа юнашар тăракан кӳртĕм сăмахсене запятойпа уйăрмаççĕ. | *Самоходка çурт умнех килсе чарăннă* иккен. (А.Артемьев.) |
| 3. | Кӳртĕм предложенисене икĕ енчен те запятой е тире лартса уйăраççĕ е скобкăна ху- | *Васюка хăнана чĕнмесен те* (хăнасем тăрăх çӳреме çамрăк-ха вăл) *пĕри те* |

| | | |
|---|---|---|
| | паççĕ. | *тепри кĕрсе тухма йыхă-раççĕ.* (Х.Уяр.) |
| 4. | Кӳртĕм сăмахсем предложенин пĕр-пĕр кĕçĕн членĕпе çыхăннă чух вĕсене çав кĕçĕн членĕпе пĕрле предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ. | *Укол тунă хыççăн пулас, аманнă çын вăрăммăн сывласа ячĕ.* (Л.Агаков.) |
| 5. | Кӳртĕм предложение уйрăм предложени пек йĕркеленĕ чух ăна скобкăна хупаççĕ, чарăну паллине скобка ăшне лартаççĕ. | *Такам ăна пуçĕнчен çатлаттарнă.* (Тен, пан улмийĕ улмуççи тăррин-чен çапла ӳкнĕ.) (Х.Уяр.) |
| 6. | Кӳртĕм сăмахсем предложени шухăшĕпе пĕтĕмĕшлĕн çыхăннине кăтартма сказуемăй хыççăн унпа юнашар тăнă чух та вĕсене запятойпа уйăраççĕ. | *Урхи мучи, пар-ха хă-вăнне, сан хăватлă пула-канччĕ, пĕрер туртса ярар-ха,* эппин. *(А.Артемьев.)* |

Чĕнӳ – кама е мĕне чĕнсе каланине пĕлтерекен сăмах. Вăл нимĕнле члена та пăхăнмасть, нимĕнле ыйтура та тăмасть. Тытăмĕ енчен ансăр тата анлă пулать.

| Ансăр | Анлă |
|---|---|
| Эсĕ, **мăнукăм**, çынсем патне кай та вĕсене телей мĕнле тупмаллине, сивве яланлăхах мĕнле çĕнмеллине каласа кă-тарт. (Юхма М.) | **Пĕчĕк ывăлăм Ванюш,** *кун-шăнах пуçна ан ус.* (Л.Сарине.); **Асамат кĕперĕ,** *савăнтар пире.* (И.Чермаков.) |

Чĕнӳ пулăвĕ.

| №№ | Мĕнле сăмахсен-чен пулать | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. | Çынна пĕлтерекен сăмахсенчен | *Ан кулян,* **анне,** *ан пăшăрхан, терĕ Олег хуллен. – Хам тĕрĕс мар ту-нине йăлтах ăнлантăм. (А.Лазарева.); Çавах та мĕн пĕлес килет сирĕн,* |

| | | |
|---|---|---|
| | | тăванăм, *мĕншĕн канăҫа ҫухатнă.* (Г.Ефимов.) |
| 2. | Тĕрлĕ япаласемпе пулăмсене палăртакан сăмахсенчен | Ырлăх! *Мĕн тери тăнăҫ та тарават тӳпе! Пăхса тăранайми инҫет!* Шăплăх та лăпкăлăх! Виҫесĕрлĕх!(В.Алентей) Ҫумăр! *Ҫу эс хытăрах, ҫитĕнесчĕ хăвăртрах.* (И.Чермаков.) |
| 3. | Ҫын ячĕсенчен | *Ватăлтăм эпĕ,* Андрей Васильевич, *сасартăках ватăлса лартăм. Вунҫиччĕре те мар пек туятăп хама кас-кас.* (Г.Ефимов.) *Ҫул ҫинче хăрушă мар-и,* Ухатер пичи. (Х.Уяр.) |

| Чĕнĕвĕн предложенири вырăнĕ | | |
|---|---|---|
| Предложени пуҫламăшĕнче | Предложени варринче | Предложени вĕҫĕнче |
| Кĕҫени, *мĕн калаҫатăн эсĕ, лăплан-ха, тархасшăн. (Х.Агивер.);* Сĕм вăрман, *сан ырлăхна ытарма ҫук! Тав сана. (Г.Ефимов.)* | *Пăрăн,* чиперкке, *алăк ҫумĕнчен, пурпĕрех эсĕ тăвас тенĕ пек пулмасть... (А.Артемьев.); Тух,* савни, *чечек парнелĕп, чечекпе пĕрле – чуна. (А.Лукин.)* | Асту, йывăҫсем нумайрах лартма тăрăш, тусăм. (В.Алентей.); Мухтав сана, тертлĕ Хура ҫăкăр! Мухтав сана, тырă ăсти! (А.Воробьев.) |

**Хутлă предложени** – икĕ е ытларах предикативлă пайран тăракан пĕрлĕх. Чăваш чĕлхинче хутлă предложенисене ҫыхăну хатĕрне пăхса ушкăнлаççĕ: союзсăр хутлă, сыпăнуллă хутлă, пăхăнуллă хутлă предложенисем.

| Хутлă предложени тĕсĕсем | | |
|---|---|---|
| №/№ | Предложени тĕсĕ | Тĕслĕхсем |
| 1. | Союзсăр хутлă предложени – предика- | *Пĕрисем купăспа ушкăнăн-ушкăнăн иртсе каяççĕ, теприсем* |

| | | |
|---|---|---|
| | тивлă пайĕсем инто-наципе çыхăннă пĕрлĕх | *пĕр вырăна пухăнса тăнă та такмакласа ташша илтереççĕ.* (Г.Ефимов.) |
| 2. | **Сыпăнуллă хутлă предложени – предикативлă пайĕсем сыпăнуллă союзсемпе çыхăннă пĕрлĕх.** | *Сана эпĕ хамăн мĕнпур шалу укçине парса тăрăп,* **анчах** *эсĕ мана каялла илсе ан кай.* (С.Элкер.); *Вăл уйрăм ларакан ăвăс айне тарса кĕме хăтланчĕ* те, *сывлăш хумĕ пачах урăх еннелле сулăнтарса ячĕ.* (Д.Гордеев.) |
| 3. | Пăхăнуллă хутлă предложени – предикативлă пайĕсем пăхăнуллă союзсемпе, союзла сăмахсемпе, хыç сăмахсемпе, аффикссемпе, вырăнĕйĕркипе çыхăннă пĕрлĕх. | *Çăварне тутăр вĕçĕпе хуплană* **пулин** *те ўсĕрнĕ сасă чылаях аякра илтĕннĕ.* (Л.Агаков.) *Йăван таврăннă* **чух** *унăн пўртĕнче кўршĕ çамрăкĕ Павăл тата Муçça ывăлĕ Ванеç «Хыпар» хаçата вуласа лараççĕ.* (С.Элкер.) |

**Сыпăнуллă хутлă предложени** пайĕсем пĕр-пĕрне пăхăнмаççĕ, пĕри теприне ăнлантармасть, вĕсем сыпăнуллă çыхăнура тăраççĕ.

| Сыпăнуллă хутлă предложенисен тĕсĕсем | | |
|---|---|---|
| №№ | Предложенисен тĕсĕ | Тĕслĕхсем |
| 1. | **Сыпăнтаракан союзлă (та(те), тата)** сыпăнуллă хутлă предложени | *Эпир кашниех ăна тав тăватпăр* та, *пурте пĕрле пўрте кĕпĕрленсе кĕретпĕр.* (А.Талвир.) |
| 2. | **Хирĕçлекен союзлă (анчах, çапах, унсăрăн, атту, ахальлĕн) сыпăнуллă хутлă предложени** | *Унтанпа вăхăт чылай иртрĕ,* **анчах** *Василий Квасов аллине нимĕнле пысăк ĕç те лекменха.* (П.Афанасьев.) |
| 3. | **Уйăракан союзлă** (пĕрре-тепре, те-те, е, е-е) сыпăнуллă хутлă предложени | Те *такам кăларса илнĕ ăна,* те *паçăр урампа хытă чупнă чух кăларса ўкерсе хăварнă.* (Л.Агаков.) |

**Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем**

| Союзсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Та (те) | *Тепĕр чух васкавлă ĕçсем пулатчĕç* те, *вуншар-вуникшер сехет* те *тăраттăм машина патĕнче.* (Л.Агаков.) |
| Тата | *Çăлтăрсем йăлтăртатаççĕ,* тата *çĕн уйăх çурла пек курăнса тăрать.* (Л.Агаков.) |

**Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложением**

| Союзсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Анчах | *Вăл чăвашла аван калаçать,* анчах *унăн çемçен тухакан сăмахĕсенче вырăс чĕлхи акценчĕ палăрать* .(Ç.Элкер.) |
| Çапах | *Витнĕ йĕтем çинче паçăрах тĕттĕмленчĕ,* çапах *çынсем хунар çутипе те пулин авăн çапаççĕ.* (А.Артемьев.) |
| Унсăрăн | *Пур çĕре те хамăн çитмелле,* унсăрăн *йĕрке пулмасть.* (А.Артемьев.) |

**Уйăракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем**

| Союзсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Те-те | *Те сывлăм вăйлă ӳкнĕ, те çумăр çуса кайнă.* (Л.Агаков.) |
| Е-е | *Е шартлама сивĕ тăрать, е тапхăр-тапхăр тăман кутăн-пуçăн çаврăнать.* (Г.Орлов.) |
| Пĕрре-тепре | *Левенĕн шурă вăрăм пӳрнисем клавишсем тăрăх* пĕрре *питĕ хăвăрт вĕлтĕртетсе чупаççĕ,* тепре *вăл вăраххăн, меллĕн темиçе аккорд илсе харăс-харăс пусать.* (А.Артемьев.) |
| Ни-ни | *Кĕнекен пĕр хĕррине çеç тĕксе пăхнипе Хветутăн* ни *ăшĕ канмасть,* ни *кĕнекин вăрттăнлăхне пĕлмест вăл.* (Х.Уяр.) |

| Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем хушшинчи шухăш çыхăнăвĕсем | |
|---|---|
| **Çыхăну тĕсĕсем тата вĕсене палăртакан союзсем** | **Тĕслĕхсем** |
| Хутсăр предложенисем умлăн-хыçлăн е пĕр вăхăтра пулса иртекен ĕçсемпе пулăмсене сăнлани.<br>Та (те), тата. | *Пирĕн палатăран пĕри килне тухса кайрĕ* те, *ун вырăнне çав кунах çĕнĕ çынна килсе ячĕç.* (А.Талвир.) |
| Хутсăр предложенисем хирĕçлев пĕлтерĕшне (хăш-пĕр чух мĕнле те пулин хушма сĕме) палăртни.<br>**Анчах, çапах, ахальлĕн, атту, унсăрăн.** | *Кăмăлласа кулни мана кăштах лăплантарчĕ,* çапах *эпĕ çав кулла хăнăхса çитеймерĕм-ха.* (А.Артемьев.) |
| Пĕр хутсăр предложенири ĕç е пулăм тепĕр предложенири ĕçĕн результачĕ пулнине кăтартни.<br>Та (те). | *Анчах эпĕ пĕр хыпарсăр çухалтăм* **та** *– вăл сан çурасна хĕрӳ пулса тăчĕ.* (А.Артемьев.) |
| Хутсăр предложенисем икĕ е темиçе ĕçрен пĕри пурнăçланмаллине, çав ĕçсенчен пĕрин çинче чарăнмаллине кăтартни.<br>Е-е, те-те. | Те *çыннисем пахчисене сырма хĕрринелле тăснă,* те *çырми пахча картисем çумне сĕвĕннĕ. (В.Элли.)* |
| Хутсăр предложенисем умлăн-хыçлăн улшăнса пыракан ĕçсене палăртни.<br>**Пĕрре-тепре.** | Пĕрре *чухăнсем çĕнтерсе пыма тытăнаççĕ пек* – тепре *пуянсем усалтарах кăшкăраççĕ.* (Юхма М.) |

**Сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси**

| №/№ | Чарăну палли | Чарăну палли лартмалли условисем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|
| 1. | Запятой | Хутсăр предложенисем пĕр вăхăтра е умлăн-хыçлăн пулса иртекен ĕçсене сăнлаççĕ. | *Тӳпе маччи ерипен хĕрелсе-хĕрелсе пычĕ* те, *вăрман тăррисене вут хып-* |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | | *са илчĕ.* (Г.Ефимов.) |
| 2. | Тире | Хутсăр предложенисем хирĕçле пĕлтерĕшлĕ пулсан. | *Тăшман салтакĕсем тепĕр хут çĕкленме тăчĕç* те – *çав вăхăтра сылтăм енче совет танкĕсем курăнса кайрĕç.* (А.Артемьев.) |
| | | Хутсăр предложенисенчи ĕçсем хăвăрт е кĕтмен çĕртен пулнине палăртаççĕ. | *Юсаса е туса хăварнă хыççăн кăмакана хутса пăхаççĕ* те – *тĕтĕмĕ мăрьерен мар, кăмака çăварĕнчен тухать е арçури пек шăхăрать.* (Г.Ефимов.) |
| | | Хыççăнхи хутсăр предложенири ĕç умĕн тăраканнин результачĕ е следствийĕ пулнине кăтартать. | *Пичĕ тăсăкларах* та – *сăмси те, çамки те, янахĕ те пĕчĕк тутипе виçеллĕ, килĕшӳллĕ.* (Ю.Скворцов.) |

**Союзсăр хутлă предложени** пайĕсем пĕр-пĕринпе интонаци пĕрлĕхĕпе çыхăнаççĕ, вĕсем хушшинчи пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсене те интонаци палăртать. Предикативлă пайĕсем пĕлтерĕш енчен мĕнле çыхăннине кура союзсăр хутлă предложенисем е сыпăнуллă хутлă предложение, е пăхăнуллă хутлине аса илтереççĕ. Тĕслĕхрен: ***Нихăшĕ те пĕр сасă кăларса ĕлкĕреймерĕ: пурте питĕ хăвăрт пулса иртрĕ.*** (Н.Симунов.) Ку предложени пăхăнуллă хутлине аса илтерет, мĕншĕн тесен иккĕмĕш пайĕ (***Пурте питĕ хăвăрт пулса иртрĕ)*** пĕрремĕш пайне ăнлантарса парать. Пайĕсем хушшине ***мĕншĕн тесен*** союз лартма пулать. ***Туратсем хушшине эрешмен карти карăннă, унăн кашни çиппинче кĕмĕл хĕм янăрать*** предложенин пайĕсем сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем пек çыхăннă, вĕсем хушшине *та* союз лартма та пулать.

| Союзсăр хутлă предложенисене тытăмĕ енчен ушкăнлани | | |
|---|---|---|
| №№ | Предложени тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
| 1. | Пĕрешкел тытăмлă предикативлă пайсенчен тăраççĕ. | *Ял çуммипе çап-çутă Çарăмсан юхса выртать, ун икĕ айккипе чăлт шурă çĕмĕртлĕх ырă шăршипе хăй патне туртать.* (П.Афанасьев.) |
| 2. | Расна тытăмлă предикативлă пайсенчен тăраççĕ. | *Çав вăхăтра Илюк тăрса ларса алăк çине пăхма тытăнчĕ: кам килме пултарать кун пек вăхăтра.* (Л.Агаков.) |

| Союзсăр хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси | | | |
|---|---|---|---|
| №№ | Чарăну паллисем | Хăçан лартаççĕ | Тĕслĕхсем |
| 1. | Запятой | Предикативлă пайĕсем пĕр евĕрлĕрех ĕçсене е пулăмсене сăнлаççĕ. | *Правлени çурчĕн чӳречисем пĕр вăхăт хĕмленсе йăлкăшрĕç, унтан вĕсем тĕксĕмленсе хуралчĕç.* (Л.Агаков.) |
| 2. | Икĕ точка | Предикативлă пайĕсенчен пĕри теприне мĕн енчен те пулин ăнлантарать. | *Тăван çĕр-шывран аякра пурăнакан салтаксен йăли çапла вăл: пĕр енчи çынсене тĕл пулсан ялапах хăйсен çĕр-шывĕ çинчен юратса асăнаççĕ. (А.Артемьев.)* |
| 3. | Тире | Предикативлă пайĕсенчи ĕçсем пĕрин хыççăн тепри хăвăрт е кĕтмен çĕртен пулса иртнине кăтартаççĕ. | *Сержант каласа та пĕтерейменрĕ – пӳлĕм стенисем витĕр снаряд çурăлмасăр шăхăрса тухса кайрĕ.* (А.Артемьев.) |
| | | Хутсăр предложенисем пĕр-пĕрне | *Кун хыççăн кун, эрне хыççăн эрне иртрĕ – ди-* |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | хирĕçлеççĕ. | *визи çав-çавах вырăнтан хускалман-ха.* (С.Павлов.) |
| | | Хутсăр предложенисем пĕр-перинпе следстви, условипе результат, вăхăтпа результат пĕлтерĕшĕсемпе çыхăнаççĕ. | *Хӳхĕм хĕрĕн хĕрлĕ сăнĕ шуралнăçемĕн шуралса пынă, сарă кăтрисем кăвакарнă – вăл вăхăтсăр ватăла пуçланă.* (А.Артемьев.) |
| 4. | Точкăпа запятой | Хутсăр предложенисен калăпăшĕ пысăк тата вĕсен ăшĕнче запятойсем пулаççĕ. | *Шăрантарса пăхакан хĕвел ăшшинче пĕтĕм çут çанталăк чĕрĕлнĕ; юр айĕнчен тин кăна тухнă çĕр ирĕккĕн сывласа, пăсланса выртать, сукмак хĕрринчи тункатасем çумĕнче çĕлен калчи çемçешке симĕс чĕлхине кăларнă.* (Ю.Скворцов.) |

Пăхăнуллă хутлă предложени тесе предикативлă пайĕсем пăхăнуллă çыхăнура тăракан хутлă пĕрлĕхе калаççĕ. Пăхăнуллă хутлă предложенире тĕп тата пăхăнуллă пайсем пур. Пăхăнуллă пайĕ тĕп пайне мĕн енчен те пулин ăнлантарса парать, ăна пăхăнать. Унăн ыйтăвĕ тĕп пайĕнчен тухса тăрать. Çыхăну хатĕрĕсем яланах пăхăнуллă пайĕнче пулаççĕ. Пăхăнуллă пайĕ тĕп пайĕ умĕн, хыççăн, ун варринче тăма пултарать. Тĕп пайĕ пăхăнулли ăшне кĕрсе лараймасть, пăхăнулли тĕп пайĕн варринче пулма пултарать.

Пăхăнуллă хутлă предложенисене (ПХП) çыхăну хатĕрĕсене пăхса ушкăнлаççĕ, 1) союзлă ПХП; 2) союзла сăмахлă ПХП; 3) хыç сăмахлă ПХП; 4) аффикссемлĕ ПХП; 5) пайĕсем вырăнĕ–йĕркипе çыхăннă ПХП.

**Пăхăнуллă хутлă предложенисен ушкăнĕсем**

| №/№ | ПХП тĕсĕсем | Çыхăну хатĕрĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1 | Союзлă пăхăнуллă хутлă предложенисем. | Пăхăнуллă союзсем: тесе, тесен, пулсан, пулсан та, пулин те; ешĕл, ехер, хуть (хăть), тăк (тĕк), мĕншĕн тесен. | *Вăрçă тухман* пулсан *епле чаплă туй кĕрленĕ пулĕччĕ кĕçĕр пирĕн ялта.* (З.Нестерова.) |
| 2 | Союзла сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем. | Союзла сăмахсем: кам, мĕн, ăçта, хăçан, мĕншĕн т. ыт. те. | Кам *нумай вулать, вăл нумай пĕлет. Йĕппи* ăçта, *çиппи çавăнта. (Ват. сăм.)* |
| 3 | Хыç сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем. | Хыç сăмахсем: чух, хыççăн, çинчен, пек, евĕр, май, тĕле, çĕре, валли т. ыт. те. | *Кируш пасартан тăвалла урампа ярмăрккă енне хăпарнă* май *вăл ĕнер хăйпе пĕрле çĕр выртнă икĕ яштака çынна тĕл пулчĕ.* (А.Талвир.) |
| 4 | Аффикссемлĕ пăхăнуллă хутлă предложенисем. | Падеж, деепричасти аффиксĕсем, -и субстантиваци аффиксĕ. | 1) *Ыйхăран шарт сиксе вăраннă пек туртăнса илетĕп те хамăр паталла икĕ аркăллă вăрăм кĕпе тăхăннă хĕрарăм уксахласа килнине куратăп.* (К.Турхан.) 2) *Кашкăрĕ куçран çухалсан тин хытса ларнă чĕлхе хускалчĕ.* (М.Кипек.) 3) *Савăл сухаллă янахĕ чалăшшăн çĕкленсе пĕр енчен тепĕр енне пăркаланни Кируша мăнаçлă хур аçине аса илтерчĕ.* |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | | (А.Талвир.) |
| 5 | Пайӗсен вырӑнӗ-йӗркипе ҫыхӑннӑ пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенисем | Пайӗсен вырӑнӗ-йӗрки | *Рая шкулти ӑсату каҫ валли аппӑшӗ укаллӑ пурҫӑнран ҫӗленӗ кӗпине утюгпа якатма пуҫларӗ.* (Л.Сачкова.) |

**Пӑхӑнуллӑ предложенисене пӗлтерӗш енчен уйӑрни**

| №№ | Пӑхӑнуллӑ предложенисен тӗсӗсем | Ыйтӑвӗсем | Тӗслӗхсем |
|---|---|---|---|
| 1 | Подлежащи пӗлтерӗшлӗ ПП. | Подлежащи ыйтӑвӗсем | Мӗн акатӑн, *ҫав ӳӑтать.* (Ват.сӑм.) Машина кӗтмен ҫӗртен килсе тухни *Ванюшка шухӑшӗсене татрӗ.* (Л.Агаков.) |
| 2 | Сказуемӑй пӗлтерӗшлӗ ПП. | Сказуемӑй ыйтӑвӗсем | Ҫини мӗнле, *ӗҫлени ҫавнашкал.* (Ват.сӑм.) |
| 3 | Дополнени пӗлтерӗшлӗ ПП. | Дополнении ыйтӑвӗсем | *Ыйхӑран шарт сиксе вӑраннӑ пек туртӑнса илетӗп те* хамӑр паталла икӗ аркӑллӑ вӑрӑм кӗпе тӑхӑннӑ хӗрарӑм уксахласа килнине *куратӑп.* (К.Турхан.) |
| 4 | Определени пӗлтерӗшлӗ ПП. | Определени ыйтӑвӗсем | *Тӑна кӗме ӗлкӗрнӗ Иванкка* вӗҫӗмсӗр ахлатса пӗр вырӑнта ҫаврӑнса ҫӳрекен старик пӑрахнӑ *(мӗнле чула?) чула ҫатӑрласа тытрӗ.* (Юхма М.) |
| 5 | Обстоятельство пӗлтерӗшлӗ ПП. | Обстоятельство ыйтӑвӗсем | Саламйи иккӗмӗш бригада уйне, Автан ҫырми патне, пырса |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | | кайнă хыççăн *(хăçан?)* *Андрей хăйне чи телейлĕ çын пек туйрĕ.* (А.Артемьев.) |

| Пăхăнуллă хутлă предложенисенче чарăну палли лартасси | | |
|---|---|---|
| №№ | Чарăну палли лартасси | Тĕслĕхсем |
| 1. | Союзла сăмахсемпе, *мĕншĕн тесен* союзпа çыхăнакан пăхăнуллă предложенисене тĕп предложенирен запятой лартса уйăраççĕ. | Кам *хура-шур курман, вăл çын хуйхи-суйхине ăнланмасть.* (Ват.сăм.); *Эпĕ хирĕç нимĕн те калаймастăп,* **мĕншĕн тесен** *хитрелĕх çинчен калаçма, уйрăмах ăна ăста куçĕпе пахалама е тиркеме чăн-чăнах хитре çын кăна пултарать.* (Ю.Скворцов.) |
| 2. | Ытти союзсемпе е хыç сăмахсемпе, е урăх мелсемпе çыхăнакан пăхăнуллă предложенисене хутлă предложени пĕлтерĕшĕ ыйтман чухне тĕп предложенирен запятойпа уйăрмаççĕ. | *Аякранах курăнса хăратса тăтăр* тесе *Ивук унăн хуппине те каçах шуратса хучĕ.* (Х.Уяр); *Ыратни иртсе* кайиччен *Ванюшка нимĕн чĕнмесĕр маччаналла пăхса выртрĕ.* (Л.Агаков.) |
| 3. | Пăхăнуллă хутлă предложенири хăш-пĕр сăмахсем хутлă пĕрлĕхĕн хăш пайне кĕнине кăтартма кирлĕ чухне пăхăнуллă хутлă предложение тĕп предложенирен запятойсемпе уйăраççĕ. | Каçхине, *виçĕ утăмран çынна паллайми тĕттĕмленсен, Актаев урама тухрĕ.* (А.Артемьев.) |
| 4. | Пăхăнуллă предложенипе тĕп предложени хушшине вĕсен иккĕшĕн те сказуемăйĕсем *–и* аффикс йышăннă чухне тире лартаççĕ. | *Ыратсассăн тем те калăн: юн* юхни – *шыв* юхни мар. (П.Хусанкай.) |

| | | |
|---|---|---|
| 5. | Пĕлтерĕшпе пăхăнуллă предложенипе тĕп предложение иккĕшне те ăнлантаракан сăмахсене пăхăнуллă предложенирен запятойпа уйăрмаççĕ, тĕп предложение кăна ăнлантараканнисене уйăраççĕ. | *Кун пек çынсем,* çил хăш еннелле хытăрах вĕрет, *çавăнталла тайăлаççĕ.* (Х.Уяр.) |

**Пăхăнуллă предложенин хутлă пĕрлĕхри вырăнĕ**

| № № | Вырăнĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. | Тĕп предложени умĕнче | Йĕтем çинчи халăх киле кайса пĕтсен *Петр Михалч пĕр-пĕчченех çулне-йĕрне пăхмасăрах килнелле танккарĕ.* (А.Артемьев.) |
| 2. | Тĕп предложени варринче | *Ванюшка каялла пăхрĕ те* нимĕç салтакĕсем халăх çинелле пынине *курчĕ.* (Л.Агаков.) |
| 3. | Тĕп предложени хыçĕнче | *Никам та астумасть* вĕсене авал кам лартса хăварнине. (Т.Петров.) |

**Кăткăсланнă хутлă предложени – виçĕ е ытларах предикативлă пайран тăракан пĕрлĕх.**

| Кăткăсланнă хутлă предложенисем | | |
|---|---|---|
| № № | Предложени тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
| 1. | **Предикативлă пайĕсем тĕрлĕ çыхăнура тăракан сыпăнуллă хутлă предложени** | Хĕвапа йăмрана тасатнă хыççăн пĕрик çултан утравра ухлĕм курăк кашласа ÿсессе[1] пурте пĕлеççĕ,[2] ***анчах*** халĕ вĕсем[3] утрав малашне пысăк тупăш парасси çинчен[4] шухăшламарĕç.[3] (Н.Мранькка.)   |
| 2. | Предикативлă пайĕсем тĕрлĕ çыхăнура тăракан союзсăр хутлă | Эпĕ сĕрме купăс каланă чух[1] Наçтук ман çинчен куç илмесĕр итлет,[2] эпĕ хурлăхлă кĕвĕ каласан[3] унăн хăмăртарах куçĕсем куççульпе тулаççĕ.[4] |

| | | |
|---|---|---|
| | предложени | (А.Артемьев.)  |
| 3. | Кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени | Каччă çăвăнса тасалчĕ,[1] Селиме панă[2] тĕрĕллĕ кĕпине, çĕнĕ шăлаварĕпе пиншакне тăхăнчĕ, çиелтен тата тепĕр пиншак уртса ячĕ,[1] каç тĕттĕмĕ çывхарсан[3] урама тухрĕ. (Илпек М.)  |

| Урăх çын сăмахĕсене палăртмалли мелсем | | |
|---|---|---|
| №№ | Тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
| 1. | Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисенче урăх çын сăмахĕсене ним улăштармасăр калаççĕ. | *Старик ăна илтмĕш пулчĕ, чĕлĕмне паклаттарса шăл витĕр каларĕ:* «Аçу та хăй ĕмĕрне хăмла картинче ирттерчĕ». (А.Артемьев.) |
| 2. | Тӳрĕ мар пуплевлĕ предложенисем калаçу мĕн çинчен пынине палăртаççĕ. Урăх çын сăмахĕсем улшăнма пултараççĕ. | Кунта интереслĕ тĕлпулусем пулма пултарни çинчен *каласа пачĕ Валентин.* (А.Артемьев.) |

| Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисенче чарăну палли лартасси | | | |
|---|---|---|---|
| №<br>№ | Тӳрĕ пуплевĕн вырăнĕ | Чарăну палли лартасси | Тĕслĕхсем |
| 1. | Тӳрĕ пуплев автор сăмахĕсем умĕнче | Тӳрĕ пуплев хыççăн ыйту палли е кăшкăру палли, е запятой тата тире лартаççĕ. Тӳрĕ пуплеве кавычкăна хупаççĕ, автор сăмахĕсене пĕчĕкрен пуçласа çыраççĕ. | *«Хамăр ята çухатасран хăранă пуль çав», – терĕ мана магазин хуралçи Энтюш Валентинович. (Х.Уяр.)* |

| | | | |
|---|---|---|---|
| 2. | **Тӳрӗ пуплев автор сӑмахӗсем хыҫӗнче** | Автор сӑмахӗсем хыҫҫӑн икӗ точка лартаҫҫӗ, тӳрӗ пуплеве пысӑкран пуҫласа ҫыраҫҫӗ, ун вӗҫне ыйту палли, кӑшкӑру палли е точка лартаҫҫӗ. Тӳрӗ пуплеве кавычкӑна хупаҫҫӗ. | *Кунти чӑвашсем мӗншӗн тӗне кӗмесӗр юлнӑ тенине хирӗҫ шкул умӗнчи карчӑксем кулкаласа ҫапла ответлерӗҫ:* «Эпир вырӑссем хӑйсем те тӗне кӗме пӑрахасса кӗтсе пурӑннӑ». (Х.Уяр.) |
| 3. | **Тӳрӗ пуплев автор сӑмахӗсем варринче** | Автор сӑмахӗсен пӗрремӗш пайӗ хыҫҫӑн икӗ точка лартаҫҫӗ, тӳрӗ пуплев хыҫҫӑн запятой, ыйту палли е кӑшкӑру палли тата тире лартаҫҫӗ. Тӳрӗ пуплеве кавычкӑна хупаҫҫӗ, автор сӑмахӗсене пӗчӗкрен ҫыраҫҫӗ, хыҫҫӑн икӗ точка лартаҫҫӗ. | *Ҫамрӑк тӑмани калать:* «Ак эпӗ ӑна хӑрах урапа ҫаклатам та теприпе часрах йывӑҫран ярса тытам», – *тет.* (И.Яковлев.) |
| 4. | **Автор сӑмахӗсем тӳрӗ пуплев варринче** | 1) Автор сӑмахӗсем хутсӑр е хутлӑ предложени пулакан тӳрӗ пуплеве татаҫҫӗ пулсан тӳрӗ пуплевӗн пӗрремӗш пайӗ хыҫҫӑн запятойпа тире, тӳрӗ пуплевӗн иккӗмӗш пайӗ хыҫҫӑн точка, ыйту палли е кӑшкӑру палли лартаҫҫӗ. Тӳрӗ пуплеве кавычкӑна хупаҫҫӗ. | «*Кун пеккине мар тӳснӗ,* – терӗ Актаев, – *Саксонире сахал мар чул ватнӑ*». (А.Артемьев.) |
| | | 2) Автор сӑмахӗсем тӳрӗ пуплеври уйрӑм предложенисем хушшинче тӑраҫҫӗ пулсан автор сӑмахӗсем хыҫҫӑн точкӑпа тире лартаҫҫӗ, тӳрӗ пуп- | «*Эпир ҫапӑҫӑпӑрха,* – терӗ каччӑ кӑнтӑрлахи сӑмахсене аса илсе. – *Е ҫӗнтерӳ пулӗ унта, е ...*». |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | левĕн иккĕмĕш пайне пысăкран пуçласа çыраççĕ. Тӳрĕ пуплевĕн пĕрремĕш пайĕ хыççăн та, иккĕмĕш пайĕ хыççăн та тивĕçлĕ чарăну паллисем лартаççĕ. Тӳрĕ пуплеве кавычкăна хупаççĕ. | (А.Артемьев.) |

## Тĕрĕслев ĕçĕсем çырмалли ыйтусем

### I. Сăмах майлашăвĕ

1. Илемлĕ литература произведенийĕнчен пĕр анлă хутсăр предложени çырса илĕр, произведенин авторне, ятне, страницине кăтартăр.

Çырса илнĕ предложенирен малтан ансăр, унтан анлă сăмах майлашăвĕсене тупса палăртăр.

Ансăр сăмах майлашăвĕсене пурне те, чи анлă ят тата глагол сăмах майлашăвĕсене пĕрер тишкерĕр.

#### Сăмах майлашăвне тишкермелли йĕрке

1) Сăмах майлашăвĕн пуçламăш форми
2) Тĕп тата пăхăнакан сăмахсем (пайĕсем). Вĕсем хăш пуплев пайне кĕреççĕ?
3) Сăмах майлашăвĕ ансăр е анлă?
4) Тĕп сăмахне кура хăш ушкăна кĕрет?
5) Пăхăнакан сăмахĕ (пайĕ) тĕп сăмахпа (пайпа) мĕнпе çыхăннă?
6) Сăмах майлашăвĕн пĕлтерĕшĕ.
7) Синтаксис енчен пайланать е пайланмасть?

#### Тишкерӳ тĕслĕхĕсем

*Часах вăл шурă тăмпа шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ.*(Ю.Скворцов. Сарă кунсем е Аделина. 47с.)

Ку предложенири ансăр сăмах майлашăвĕсем: *çитсе чарăнчĕ, пӳрт умне, пĕчĕк пӳрт, шуратнă пӳрт, тăмпа шуратнă, шурă тăмпа, часах чарăнчĕ.*

**Анлă сăмах майлашăвĕсем:** *часах çитсе чарăнчĕ, часах пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, часах пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, часах шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, часах тăмпа шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, часах шурă тăмпа шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, тăмпа шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, шурă тăмпа шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, шурă тăмпа шу-*

*ратнă, шуратнă пĕчĕк пÿрт, пĕчĕк пÿрт умне, шуратнă пĕчĕк пÿрт умне, шурă тăмпа шуратнă пĕчĕк пÿрт умне.*

### Ансăр сăмах майлашăвĕсене тишкерни

Мĕнле?
x
*Çитсе чарăнчĕ*

Пуçламăш форма: *çитсе чарăн.* Тĕп сăмахĕ – *чарăн* (гл.), пăхăнаканни - *çитсе* (гл., деепр.). Ку ансăр глагол сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан сăмахĕ тĕп сăмахпа вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă, обстоятельство пĕлтерĕшлĕ, синтаксис енчен пайланать.

Мĕн?
x
*Пÿрт умне*

Пуçламăш форма: *пÿрт умĕ.* Тĕп сăмахĕ – *умĕ* (я.я.), пăхăнаканни – пÿрт (я.я.). Ку ансăр ят сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан сăмахĕ тĕп сăмахпа вырăнĕ-йĕркипе тата камăнлăх категорийĕн (-ĕ) аффиксĕпе çыхăннă, определени пĕлтерĕшлĕ, синтаксис енчен пайланмасть.

Мĕнле?
x
*Пĕчĕк пÿрт*

Сăмах майлашăвĕ пуçламăш формăра. Тĕп сăмахĕ – *пÿрт* (я.я.), пăхăнаканни – *пĕчĕк* (п.я.). Ку ансăр ят сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан сăмахĕ тĕп сăмахпа вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă, определени пĕлтерĕшлĕ, синтаксис енчен пайланать.

Мĕнле?
x
*Шуратнă пÿрт*

Пуçламăш формăра. Тĕп сăмахĕ – *пÿрт* (я.я.), пăхăнаканни – *шуратнă* (гл., прич.). Ку ансăр ят сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан сăмахĕ тĕп сăмахпа вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă, определени пĕлтерĕшлĕ, синтаксис енчен пайланать.

Мĕнпе?
x
*Тăмпа шуратнă*

Пуçламăш форма: *тăмпа шурат.* Тĕп сăмахĕ – *шурат* (гл.), пăхăнаканни – *тăмпа* (я.я.). Ку ансăр глагол сăмах

майлашăвĕ, пăхăнакан сăмахĕ тĕп сăмахпа пĕрлелĕх падежĕн –па аффиксĕпе çыхăннă, дополнени пĕлтерĕшлĕ, синтаксис енчен пайланать.

Мĕнле? x

*Шурă тăмпа*

Пуçламăш форма: *шурă тăм.* Тĕп сăмахĕ – *тăм* (я.я.), пăхăнаканни – *шурă* (п.я.). Ку ансăр ят сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан сăмахĕ тĕп сăмахпа вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă, определени пĕлтерĕшлĕ, синтаксис енчен пайланать.

Хăçан? x

*Часах чарăнчĕ*

Пуçламăш форма: *часах чарăн.* Тĕп сăмахĕ – *чарăн* (гл.), пăхăнаканни – *часах* (нар.). Ку ансăр глагол сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан сăмахĕ тĕп сăмахпа вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă, обстоятельство пĕлтерĕшлĕ, синтаксис енчен пайланать.

Анлă сăмах майлашăвĕсене тишкерни

1 2 3 4 5 6 7 8 9

*Часах шурă тăмпа шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ*




Пуçламăш форма: *часах шурă тăмпа шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăн.* Тĕп пайĕ – *шурă тăмпа шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăн* (хăй анлă глагол сăмах майлашăвĕ пулать), пăхăнаканни – *часах.* Ку анлă глагол сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан пайĕ тĕп пайĕпе вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă, обстоятельство пĕлтерĕшлĕ, синтаксис енчен пайланать.

1 2 3 4 5 6

*Шурă тăмпа шуратнă пĕчĕк пӳрт умне*



Пуҫламăш форма: *шурă тăмпа шуратнă пĕчĕк пӳрт умĕ.* Тĕп пайĕ – *пĕчĕк пӳрт умĕ* (анлă ят сăмах майлашăвĕ), пăхăнаканни – *шурă тăмпа шуратнă.* Ку анлă глагол сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан пайĕ тĕп пайĕпе вырăнĕйĕркипе ҫыхăннă, определени пĕлтерĕшлĕ, синтаксис енчен пайланать.

### Усă курмалли литература


1. Андреев И.А. Хальхи чăваш чĕлхи. Синтаксис. – Шупашкар, 2005. – 36–53 с.
2. Андреев И.А. Чăваш чĕлхи: Синтаксис. 8-9 классем валли. – Шупашкар, 2001. – 11–31 с.
3. Андреев И.А. Структура именных синтагм в чувашском языке //УЗ ЧНИИ. – Вып. 39. – С. 78–99.
4. Горский С.П. Хальхи чăваш литература чĕлхин синтаксисĕ. – Шупашкар, 1970.
5. Лекци материалĕ.


## II. Хутсăр предложени

1. Илемлĕ литература произведенийĕнчен икĕ составлă, анлă хутсăр предложени ҫырса илĕр, ăна пĕтĕмĕшле хак парăр, тулли синтаксис тишкерĕвĕ тăвăр.

### Хутсăр предложение пĕтĕмĕшле хак памалли йĕрке

1) Предложени хутсăр пулнине палăртăр, тĕп членĕсене тупăр.
2) Каланин тĕллевне кура хăш ушкăна кĕрет?
3) Кăмăл-туйăм енчен мĕнле предложени (кăшкăруллă е кăшкăруллă мар) пулать?
4) Ҫирĕплетекен е хирĕҫлекен предложени?
5) Тытăмĕ енчен предложени хăш ушкăна кĕрет:
   а) икĕ е пĕр составлă (тĕсĕ);
   ă) ансăр е анлă;
   б) тулли е тулли мар.
6) Предложени мĕнпе (пĕр йышши е уйрăм тăран членсемпе, кӳртĕм сăмахсемпе е предложенисемпе, обращенипе) кăткăсланнă?
7) Чарăну палли лартассипе ҫыхăннă уйрăмлăхсене ăнлантарăр.
8) Предложение членсем тăрăх туллин тишкерĕр.

Тишкерӳ тĕслĕхĕсем

*Шурӑмпуҫ ҫӑлтӑрĕ, пĕчĕкҫĕ уйӑх пек, симĕс мерчен пайӑркасем ярсах ҫутатать.* (Ю. Скворцов. Сарӑ кунсем е Аделина.)

Ку хутсӑр (*ҫӑлтӑрĕ* – подлежащи, *ҫутатать* – сказуемӑй), калуллӑ, кӑшкӑрулла мар, ҫирĕплетекен, икĕ составлӑ, анлӑ, тулли предложени. Вӑл уйрӑм тӑран членпа (*пĕчĕкҫĕ уйӑх пек*) кӑткӑсланнӑ, ӑна икĕ енчен запятойпа уйӑрнӑ, мĕншĕн тесен танлаштару сӑмахĕсем шухӑш тӑрӑх хыҫҫӑнхи сӑмахсемпе пĕтĕмĕшлĕн ҫыхӑннӑ.

Предложение тишкересси тĕп членсенчен пуҫланмалла, унтан подлежащи тата сказуемӑй ушкӑнне кĕрекен кĕҫĕн членсене тишкермелле.

*Мĕн*? - *ҫӑлтӑрĕ* – подлежащи, тĕп падежри, пĕрреллĕ хисепри япала ятĕнчен пулнӑ.

*Ҫӑлтӑрĕ мĕн тӑвать*? - *ҫутатать* – сказуемӑй, кӑтарту наклоненийĕнчи, хальхи вӑхӑтри, пĕрреллĕ хисепри, виҫҫĕмĕш сӑпатри глаголтан пулнӑ.

*Мĕн ҫӑлтӑрĕ*? – *шурӑмпуҫ* - определени, тĕп падежри, пĕрреллĕ хисепри япала ятĕнчен пулнӑ.

*Мĕнле ҫутатать*? – *пайӑркасем ярсах* – обстоятельство, япала ячĕпе глаголӑн сӑпатсӑр форминчен, деепричастирен пулнӑ.

*Мĕнле пайӑркасем*? – *мерчен* – определени, тĕп падежри, пĕрреллĕ хисепри япала ятĕнчен пулнӑ.

*Мĕнле мерчен*? – *симĕс* – определени, паллӑ ятĕнчен пулнӑ.

*Мĕнле ҫутатать*? – *пĕчĕкҫĕ уйӑх пек* – уйрӑм тӑран обстоятельство, паллӑ ячĕ, япала ячĕ тата хыҫ сӑмах пĕрлешĕвĕнчен пулнӑ.

2. Илемлĕ литература произведенийĕнчен пĕр составлӑ предложенин кашни ушкӑнĕпе (паллӑ мар сӑпатлӑ, сӑпатсӑр, ят предложенисем) пĕрер предложени ҫырса илĕр, пĕтĕмĕшле хак парӑр, тĕп членсене тупӑр.

Тишкерӳ тĕслĕхĕсем

1) *Тĕрĕссипе, Вассан хӑйĕн те чӑн-чӑн пурнӑҫран юлас килмест. (В. Алентей.)*

Ку хутсăр, калуллă, кăшкăруллă мар, хирĕçлекен, пĕр составлă, сăпатсăр, анлă, тулли предложени. Кÿртĕм сăмахпа кăткăсланнă. Вăл предложени пуçламăшĕнче тăрать, çавăнпа ун хыççăн запятой лартнă.

Тĕп членĕ – *юлас килмест* – сказуемăй, глаголăн сăпатсăр формипе (причасти) сăпатлă глагол пĕрлешĕвĕнчен пулнă.

2) *Вутта вăйсăр чух сÿнтерме хушнă.* (Ват. сăм.)

Ку хутсăр, калуллă, кăшкăруллă мар, çирĕплетекен, пĕр составлă, паллă мар сăпатлă, анлă, тулли предложени. Вăл нимĕнпе те кăткăсланман, чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем çук. Тĕп членĕ – *хушнă* – сказуемăй, глаголăн сăптасăр форминчен, иртнĕ причастирен пулнă.

3) *Чул хапха.* (В. Алентей.)

Ку хутсăр, калуллă, кăшкăруллă мар, çирĕплетекен, пĕр составлă, ят, анлă, тулли предложени. Вăл нимĕнпе те кăткăсланман, чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем çук. Тĕп членĕ – *хапха* – подлежащи, тĕп падежри япала ятĕнчен пулнă.

### Усă курмалли литература


1. Андреев И.А. Хальхи чăваш чĕлхи. Синтаксис. – Шупашкар, 2005. – 56–201 с.

2. Андреев И.А. Чăваш синтаксисĕн ыйтăвĕсем. 1 пай. – Шупашкар, 1973. – 92–159 с.

3. Андреев И.А. Чăваш чĕлхи: Синтаксис. 8-9 классем валли. – Шупашкар, 2001. – 34–138 с.

4. Горский С.П. Хальхи чăваш литература чĕлхин синтаксисĕ. – Шупашкар, 1970.

5. Чернов М.Ф. Обособленные члены предложения в современном чувашском языке. – Чебоксары, 1963.

6. Чăваш орфографийĕпе пунктуацийĕ / И.А. Андреев редакциленĕ. – Шупашкар, 1991.


## III. Хутлă предложени

### 1. Сыпăнуллă хутлă предложени

Илемлĕ литература произведенийĕнчен сыпăнтаракан, уйăракан, хирĕçлекен союзсемпе йĕркеленнĕ пĕрер сыпăнуллă хутлă предложени çырса илĕр, палăртнă йĕркепе тишкерĕр.

**Сыпăнуллă хутлă предложение тишкермелли йĕрке**

1) Сыпăнуллă хутлă предложени пулнине калăр.
2) Миçе предикативлă пайран тăрать, вĕсен предикативлă никĕсĕсем (тĕп членĕсем).
3) Предикативлă пайĕсем мĕнле союзпа çыхăннă?
4) Предикативлă пайĕсем хушшинче мĕнле пĕлтерĕш (шухăш) çыхăнăвĕ палăрать?
5) Предложени мĕнпе кăткăсланнă?
6) Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем.

**Тишкерӳ тĕслĕхĕсем**

1) *Кăнтăрла янкăр тăрă пĕлĕтре хĕвел йăлтăртатать, анчах унăн ăшши иксĕлнĕ ĕнтĕ.* (М Трубина. Асăнмалăх, савăнмалăх.)

Ку сыпăнуллă хутлă предложени, икĕ предикативлă пайран тăрать (тĕп членĕсем: *хĕвел йăлтăртатать, ăшши иксĕлнĕ*). Предикативлă пайĕсем *анчах* союзпа çыхăннă, вĕсем хушшинче хирĕçлев пĕлтерĕшĕ палăрать. Предложени нимĕнпе те кăткăсланман. Сыпăнуллă хутлă предложенин пайĕсене пĕр-пĕринчен (*анчах* союз умĕн) запятой лартса уйăрнă.

Предложенин схеми: [ 1 ], анчах [ 2 ].

2) *Хурăн çинчен салакайăк чĕвĕлтетсе анчĕ те, пĕчĕк хăрăк турат хуçăлса кӳлле чăмрĕ.* (П. Афанасьев.)

Ку сыпăнуллă хутлă предложени, икĕ предикативлă пайран тăрать (тĕп членĕсем: *салакайăк анчĕ, турат чăмрĕ*). Предикативлă пайĕсем *те* союзпа çыхăннă, вĕсем пĕр ĕç хыççăн тепри пулса иртнине сăнлаççĕ. Сыпăнуллă хутлă предложенин пайĕсене пĕр-пĕринчен запятой лартса уйăрнă.

Предложенин схеми: [ 1 ] те, [ 2 ]

## Пайĕсем тĕрлĕ çыхăнура тăракан сыпăнуллă хутлă предложени

Илемлĕ лтература хайлавĕнчен пайĕсем тĕрлĕ çыхăнура тăракан пĕр сыпăнуллă хутлă предложени çырса илĕр, палăртнă йĕркепе тишкерĕр, схемине ӳкерĕр.

### Тишкерӳ йĕрки

1) Предложени миçе предикативлă пайран тăрать? Пайĕсенчи тĕп членсене тупăр. Предложени тĕсне калăр.

2) Предложени шухăшĕ енчен мĕнле пайланать? Пайĕсем пĕр-пĕринпе мĕнпе çыхăнаççĕ?

3) Шухăшĕ енчен уйрăлакан пайсем хăйсем мĕнле предложенисем пулаççĕ? Вĕсене кашнине тишкерĕр.

4) Предложени пĕтĕмĕшле мĕнпе кăткăсланнă?

5) Чарăну паллисем лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсене ăнлантарăр.

### Тишкерӳ тĕслĕхĕ

*Пӳлĕмре çутă та çутса ячĕç[1], чӳрече карри витĕр пĕр-икĕ хутчен кил хуçин лăпсăркка пуçĕ курăнчĕ[2(I)], анчах унта урăх çын пурри[3] палăрмарĕ[4(II)].(Л.Агаков. Юманлăхра çапла пулнă.)*

Ку предложени пурĕ тăватă предикативлă пайран тăрать, тĕп членсем пек çыхăннă сăмахсем: ***çутса ячĕç; пуçĕ курăнчĕ; çын пурри; палăрмарĕ.*** Пĕтĕмĕшле сыпăнуллă хутлă предложени пулать, мĕншĕн тесен шухăшĕ енчен икĕ пая уйрăлать, вĕсем пĕр-пĕринпе ***анчах*** союзпа çыхăннă. Пĕрремĕш пайĕ (I) хăй союзсăр хутлă предложени пулать, вăл икĕ предикативлă пайран тăрать, вĕсем пĕр-пĕринпе интонаци пĕрлĕхĕпе çыхăннă. Пайĕсем пĕр вăхăтра пулса иртекен ĕçсене сăнласа параççĕ, çавăнпа та вĕсем хушшине запятой лартнă. Иккĕмĕш пайĕ (II) пăхăнуллă хутлă предложени, пăхăнуллă пайĕ(3) тĕп пайĕпе(4) – ***и*** аффикспа çыхăнать, *мĕн?* ыйтура тăрать, подлежащи пĕлтерĕшлĕ пулать. Предложени нимĕнпе те кăткăсланман. ***Анчах*** союз умĕн яланах запятой лартмалла.

Предложени схеми:




## 2. Пăхăнуллă хутлă предложени

Илемлĕ литература произведенийĕнчен пайĕсем аффикспа, хыç сăмахпа, союзпа, союзла сăмахпа, вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă 5 пăхăнуллă хутлă предложени çырса илĕр. Вĕсене кăтартнă йĕркепе тишкерĕр.

### Пăхăнуллă хутлă предложение тишкермелли йĕрке

1) Пăхăнуллă хутлă предложени пулнине калăр.
2) Миçе предикативлă пайран тăрать? Хăшĕ тĕп пайĕ, хăшĕ пăхăнаканни? Тĕп членĕсем.
3) Пăхăнуллă пайĕ тĕп пайĕпе мĕнпе çыхăннă? Пăхăнуллă пайĕн ыйтăвĕ, пĕлтерĕшĕ.
4) Пăхăнуллă пайĕн вырăнĕ, тĕп пайĕпе мĕнле (пĕтĕмĕшлĕн е тĕп пайĕнчи пĕр-пĕр сăмахпа е сăмахсен пĕрлешĕвĕпе) çыхăннă?
5) Предложени мĕнпе кăткăсланнă?
6) Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсене ăнлантарăр (пур пулсан).

### Тишкерӳ тĕслĕхĕсем

1) *Кĕрхи çилпе вăрман кашлама тытăнсан*[1] *çулçăсем хăрана кайăксем пек пăлханаççĕ,вăрмантан явăнса вĕçсе тухаççĕ*[2].(М.Трубина. Асăнмалăх, савăнмалăх.)

Ку пăхăнуллă хутлă предложени, икĕ предикативлă пайран тăрать (тĕп членĕсем: *вăрман кашлама тытăнать, çулçăсем вĕçсе тухаççĕ*). 2-мĕш предложени – тĕп пайĕ, 1-мĕшĕ – пăхăнулли. Пăхăнуллă пайĕ тĕп пайĕпе деепричастин *–сан* аффиксĕпе çыхăннă, хăçан? ыйтура тăрать, обстоятельство пĕлтерĕшлĕ, тĕп пайĕ умĕн тăрать, унпа пĕтĕмĕшлĕн çыхăнать. Предложени пĕр йышши членсемпе (*пăлханаççĕ, вĕçсе тухаççĕ*) кăткăсланнă, вĕсем союзсăр çыхăннă пирки запятой лартса уйăрнă.

Предложени схеми: 

2) *Хур кайăксем Çавал патне çитнĕ чух*[1] *шăпах хĕвел хĕмленсе тухрĕ*[2].(Кипек М. Кайăк тусĕ.)

Ку пăхăнуллă хутлă предложени, икĕ предикативлă пайран тăрать (тĕп членĕсем: *хур кайăксем çитнĕ, хĕвел тухрĕ*). 2-мĕш предложени – тĕп пайĕ, 1-мĕшĕ – пăхăнулли. Пăхăнуллă пайĕ тĕп пайĕпе *чух* хыç сăмахпа çыхăннă, хăçан? ыйтура тăрать, обстоятельство пĕлтерĕшлĕ, тĕп пайĕ умĕн тăрать, ăна пĕтĕмĕшлĕн ăнлантарать. Предложени нимĕнпе те кăткăсланман, чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем çук.

Предложени схеми: 

*Вĕсем*[1] *Яриле мучи утса такăрлатнă*[2] *ансăр сукмакпа пĕчĕк уçланка тухрĕç*[1].(Х.Уяр.)

Ку пăхăнуллă хутлă предложени, икĕ предикативлă пайран тăрать (тĕп членĕсем: *вĕсем тухрĕç, Яриле мучи такăрлатнă*). 1-мĕш предложени – тĕп пайĕ, 2-мĕшĕ – пăхăнулли. Пăхăнуллă пайĕ тĕп пайĕпе вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă, *мĕнле*? ыйтура тăрать (*мĕнле сукмакпа?*), определени пĕлтерĕшлĕ, тĕп пайĕ варринче вырнаçнă, тĕп пайĕнчи *сукмакпа* сăмаха ăнлантарать. Предложени нимĕнпе те кăткăсланман.

Предложени схеми:  .

**Кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени**
**Тишкерӳ йĕрки**

1) Предложени миçе предикативлă пайран тăрать? Пайĕсенчи тĕп членсене палăртăр. Предложени тĕсне калăр.

2) Тĕп тата пăхăнуллă пайĕсене тупăр, вĕсем хăйсем мĕнле предложенисем пулнине калăр, кашнине тишкерĕр.

3) Пăхăнуллă пайне (е пайĕсене) тĕп пайĕпе çыхăнтаракан грамматика хатĕрĕсене тупăр, тишкерӳ тăвăр.

4) Предложени пĕтĕмĕшле мĕнпе кăткăсланнă?

5) Чарăну паллисем лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсене ăнлантарăр (пур пулсан).

### Тишкерӳ тĕслĕхĕ

*Пăрахут тăвалла хускалсан*[1] *купца нумайччен алă сулса тăчĕ, унтан карлăк ҫине кăкăрĕпе ӳпĕнчĕ те*[2] *каҫ сĕмлĕхĕнче хура тĕслĕн курăнакан Атăл шывĕ анаталла юхнине*[3] *сăнама тытăнчĕ*[2].(Г.Краснов.)

Ку предложени виҫĕ предикативлă пайран тăрать. Пайĕсенчи тĕп членсем пек ҫыхăннă сăмахсем: *пăрахут хускалсан; купца тăчĕ, ӳпĕнчĕ, сăнама тытăнчĕ; Атăл шывĕ юхнине.* Илнĕ тĕслĕх кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени, мĕншĕн тесен предикативлă пайĕсем виҫҫĕ, вĕсем хушшинче пăхăнуллă ҫыхăну ҫеҫ палăрать.

Предложенин тĕп пайĕ иккĕмĕшпе виҫҫĕмĕш пайсен пĕрлĕхĕ пулать, пăхăнуллă пайĕ – пĕрремĕш предложени. Тĕп пайĕ хăй пăхăнуллă хутлă предложени. Пăхăнуллă пайĕ (3) тĕп пайĕпе (2) пару падежĕн –е аффиксĕпе ҫыхăнать, мĕне? ыйтура тăрать, объект пĕлтерĕшлĕ пулать.

Пăхăнуллă пайĕ (1) тĕп пайĕпе (2,3) деепричастин *–сан* аффиксĕпе ҫыхăнать, хăҫан? ыйтура тăрать, вăхăт обстоятельстви пĕлтерĕшлĕ пулать. Предложени пĕтĕмĕшле пĕр йышши сказуемăйсемпе (тăчĕ, ӳпĕнчĕ, сăнама тытăнчĕ) кăткăсланнă, союзсăр ҫыхăннисене запятой лартса уйăрнă.




### 3. Союзсăр хутлă предложени

Илемлĕ литература произведенийĕнчен виҫĕ союзсăр хутлă предложени (предикативлă пайĕсене запятой, тире, икĕ точка лартса уйăрнă тĕслĕхсем) ҫырса илĕр, тишкерӳ тăвăр.

#### Союзсăр хутлă предложение тишкерӳ тумалли йĕрке

1) Союзсăр хутлă предложени пулнине палăртăр.
2) Миҫе предикативлă пайран тăрать? Тĕп членĕсем.
3) Предикативлă пайĕсем мĕнпе ҫыхăннă?
4) Предикативлă пайĕсем хушшинче мĕнле пĕлтерĕш (шухăш) ҫыхăнăвĕ палăрать?
5) Предложени мĕнпе кăткăсланнă?

6) Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем.

### Тишкерÿ тĕслĕхĕсем

1) *Вăрман тÿпине тĕтре хупласа тăрать[1],ун витĕр хĕвелĕн пайăркисем аран-аран кăна сăрхăнса тухаççĕ[2]*.(Д.Гордеев. Акман ыраш.)

Ку союзсăр хутлă предложени, икĕ предикативлă пайран тăрать (тĕп членĕсем: *тĕтре хупласа тăрать, пайăркисем тухаççĕ*). Предикативлă пайĕсем интонаципе çыхăннă, вĕсем пĕр вăхăтри пулăмсене сăнласа параççĕ, çавăнпа вĕсене запятой лартса уйăрнă. Предложени нимĕнпе те кăткăсланман.

Предложени схеми: [ 1 ], [ 2 ].

2) *Вăрмансемпе садсем çуллахи пек нумай сас-чĕвлĕ мар ĕнтĕ[1]: кайăксем кăнтăралла вĕçме тытăнаççĕ[2]*. (Н.Матвеев.)

Ку союзсăр хутлă предложени, икĕ предикативлă пайран тăрать (тĕп членĕсем: *вăрмансемпе садсем сас-чĕвлĕ мар, кайăксем вĕçме тытăнаççĕ*). Предикативлă пайĕсем интонаципе çыхăннă, иккĕмĕш пайĕ пĕррремĕш пайне ăнлантарать, уçса парать, çавăнпа вĕсем хушшине икĕ точка лартнă. Предложени нимĕнпе те кăткăсланман.

Предложени схеми:

[ 1 ]: [ 2 ].

### Пайĕсем тĕрлĕ çыхăнура тăракан союзсăр хутлă предложени

Илемлĕ литература хайлавĕнчен пайĕсем тĕрлĕ çыхăнура тăракан пĕр союзсăр хутлă предложени çырса илĕр, палăртнă йĕркепе тишкерĕр, схемине ÿкерĕр.

### Тишкерÿ йĕрки

1) Предложени миçе предикативлă пайран тăрать? Пайĕсенчи тĕп членсене тупăр. Предложени тĕсне калăр.

2) Предложени пухăшĕ енчен мĕнле пайланать? Пайĕсем мĕнпе çыхăннă?

3) Шухăшĕ енчен уйрăлакан пайсем хăйсем мĕнле предложенисем пулаççĕ? Вĕсене кашнине тишкерĕр.

4) Предложени пĕтĕмĕшле мĕнпе кăткăсланнă?

5) Чарăну паллисем лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсене ăнлантарăр.

### Тишкерӳ тĕслĕхĕ

*Çут çанталăк пытарса усранине*[1] *тупма çăмăлрах*:[2(I)] *кашни япала* [3]*ĕмĕрсем иртнĕ май*[4] *çиеле тухать*[3], *пĕр çын тупайманнине* [5] *тепри тупать*[6(II)]. (В.Эктел. Шавкăн. 45с.).

Ку предложени пурĕ ултă предикативлă пайран тăрать. Пайĕсенчи тĕп членсем: 1) *çут çанталăк* (подл.) *усранине* (сказ.); 2) *çăмăлрах* (сказ.); 3) *япала* (подл.) *çиеле тухать* (сказ.); 4) *ĕмĕрсем* (подл.) *иртнĕ* (сказ.); 5) *çын* (подл.) *тупайманнине* (сказ.); 5) *тепри* (подл.) *тупать* (сказ.). Ку союзсăр хутлă предложени мĕншĕн тесен вăл шухăшĕ енчен икĕ пая уйрăлать, вĕсем пĕр-пĕрипе интонаципе пĕрлешеççĕ. Пĕрремĕш пайĕ ( I ) хăй пăхăнуллă хутлă предложени пулать: пăхăнуллă пайĕ (1) тĕп пайĕпе (2) пару падежĕн –е аффиксĕпе çыхăнать, дополнени пĕлтерĕшлĕ, мĕне? ыйтура тăрать. Иккĕмĕш пайĕ ( II ) – хăй союзсăр хутлă предложени, вăл тăватă предикативлă пайран тăрать, шухăшĕ енчен каллех икĕ пая уйрăлать. Пĕрремĕш пайĕ – пăхăнуллă хутлă предложени, пăхăнуллă пайĕ (4) тĕп пайĕпе (3) ***май*** хыç сăмахпа çыхăнать, хăçан? ыйтура тăрать, обстоятельство пĕлтерĕшлĕ пулать. Иккĕмĕш пайĕ те пăхăнуллă хутлă предложени. Пăхăнуллă пайĕ (5) тĕп пайĕпе (6) –е аффикспа çыхăнать.

Предложени нимĕнпе те кăткăсланман. Союзăр хутлă предложенин иккĕмĕш пайĕ(I) пĕрремĕшне(II) ăнлантараççĕ, çавăнпа вĕсем хушшине икĕ точка лартаççĕ. Иккĕмĕш союзăр хутлă предложенире пайĕсем пĕр евĕрлĕрех пулăмсене сăнланă пирки вĕсем хушшине запятой лартаççĕ.

Предложени схеми:



Усӑ курмалли литература

1. Андреев И.А. Хальхи чӑваш чӗлхи. Синтаксис. – Шупашкар, 2005. – 224–326 с.

2. Андреев И.А. Чӑваш синтаксисӗн ыйтӑвӗсем. 11 пай. – Шупашкар, 1975.

3. Андреев И.А. Чӑваш чӗлхи. 8–9 классем валли.

4. Андреев И.А. Чӑваш чӗлхи. Синтаксис. – Шупашкар, 2005.

5. Лекци материалӗсем.

## *Тишкерӳ тумалли текстсем*

1. Кам юратмасть-ши çуллахи ырӑ кунсенче пулла çӳреме? Пӑхӑр-ха, Сĕве кукринче миçе пулӑç ларать! Кашнийĕнех вӑлта яма ятарласа тунӑ çур утрав пур. Миçе çур утрав кунта? Шутласа та кӑлараяс çук. Вĕсене мĕнле тунине пĕлетĕр-и? Çыран хĕррине, кӑштах шыва кĕрсе, шалчасем çапнӑ та çур кӑшӑл пек туса çатан авнӑ, унтан тӑпра купаланӑ. (А.Кӑлкан.)

2. Çынсем юпа уйӑхĕнче çӑвакан юра питех шанмаççĕ. Чӑнах та, вӑл çĕрле е ирхине шӳсе çемçелнĕ çĕр питне тӑрӑшсах шурӑ пĕркенчĕкпе витет, анчах каçчен унӑн тĕсĕ те юлмасть. Чӳк уйӑхĕнчи юр вара ун пек мар, вӑл часах ирĕлсе пĕтмест, хӑш чух икĕ-виçĕ кун хушши, тепĕр чух эрни-эрнипех ура айĕнче кӑчӑртатса выртать. (М.Кипек.)

3. Хутран-ситрен çапла та пулкалать. Чӳк уйӑхĕ пуçламӑшĕнчех çанталӑк сивĕтет. Çил çурçĕр енне çаврӑнать те, кутсӑр-пуççӑр çил-тӑман ахӑрма тытӑнать. Пĕр кун иртет, тепĕр кун иртет. Юр çаплах çӑвать те çӑвать. Юлашкинчен вӑхӑтлӑха чарӑннӑ пек пулать. Хĕвел те хӑмӑр пĕлĕт айĕнчен тухса пӑхать. Анчах çурçĕр çилĕ тĕнчене шӑнтмаллипех шӑнтса ярать те, чĕркуççи таран хĕвел кайнӑ юр çуркуннечченех выртса юлать. (М.Кипек.)

4. – Çук, ӑна нимĕн те асаплантармасть. Пирĕн килте пурте йĕркеллĕ. Ĕçре те ӑна хисеплеççĕ. Ӑна ĕçрен тухма йывӑр пулать... Йӑлана кĕнине хирĕçлеймĕн. Куна хӑвӑрах пĕлетĕр! (П.Алексин.)

5. Çуркунне, çут çанталӑк чĕрĕлсен, чи малтан йӑмрана сĕткен кĕрет. Касса илетĕн те пĕр-пĕр якарах турата шаккаса шанкине ӳкеретĕн, пулас шӑпӑр (шӑхлич) валли хуппинчен чĕлĕх тӑватӑн. Анкарти хыçĕнчех – вĕтлĕх вӑрманлӑх. Тарӑн çырма. Унта шĕшкĕ хуппине касса сĕветĕн. Çак хуппа чĕлĕх çине чĕркесе каятӑн. Акӑ сана ĕне мӑйраки пысӑкӑш шӑхлич хатĕр те. (А.Емельянов.)

6. – Итле-ха, шӑпӑрлан. Арçут çырмине пĕлетĕн-и? Унта тӑм шӑтӑкĕсем пур. Çиелти шӑтӑкра – шур тӑм. Çавӑнта кайса ху пуçу пысӑкӑш илсе кил. (А.Емельянов.)

7. Пирĕн пӳрт вырӑнĕнче урамалла тӑватӑ чӳречеллĕ чул çурт ларать. Пӳрт çумĕнчех сӑрланӑ вырӑсла хапха, унтан

лаç... Лаç умӗнче пахча. Чиесем те ватăлса кайса йăмрапа танах çӗкленнӗ. Картине улăштарнă, лаç тăррисене шиферпа витнӗ. Пахча умӗнче сак. (А.Емельянов.)

8. Тӗлӗк-и ку, чăн-и? Куçăмсене уçатăп та пӗр хушă шалт тӗлӗнсе выртатăп. Чăн та, кил картинчи вут купи çинче мар иккен эпӗ, мамăк тӳшек çинче. Каснă-лартнă тӗлӗкре курнă чаплă пӳлӗмех, хаклă кавирсем, ылтăн хашаклă ӳкерчӗксем, автомат, фляга... Анчах та чи тӗлӗнмелли – ман пуç вӗçӗнче Лисук ларать! Гимнастеркăпа вăл, çинçе пилӗкне чӗн пиçиххипе туртса çыхнă. (А.Артемьев.)

9. Акă тӗмӗсем. Мӗн тери хăрушшăн курăнаççӗ вӗсем тӗттӗм каç! Автомата çирӗпрех тытатăп. Акă кабель татăкӗ... Асăрхануллăн йӗри-тавралла пăхса илтӗм: такам пур пекех туйăнать. Пăч тӗттӗм, çывăхра пӗр сас-чӗвӗ те илтӗнмест. (А.Артемьев.)

10. Клуб еннелле хавасланса утатăп. Ман чӗрере пысăк савăнăç. Эпӗ хам çамрăкшăн та, ырă сывă пулнăшăн та яла ӗçлеме таврăннăшăн та, савнине тӗл пулнăшăн та пӗтӗм чунтан савăнатăп! Нумайрах пурăнас, ӗçлес, юратас килет манăн. (А.Артемьев.)

11. Ашшӗ вăрăм сăмсаллă шур картусӗпе. Хӗвеле хирӗç пăхма меллӗ тет унпа. Вăрçăран таврăннă хулăн тӗплӗ аттине те пăрахмасть-ха. Шăлаварӗ те çӗнӗччӗ-ха ашшӗн иртнӗ çулсенче. (И.Егоров.)

12. Çӳллӗ çыранра эпир иккӗнех. Манăн та пусăрăнчăк кăмăл çӗкленме пуçларӗ. Унпа çумлăн тăрса кăшт çамрăкланса кайрăм-ши? Пӗлме çук. (И.Егоров.)

13. Эпир ик енӗпе те йывăçсем ашкăрса ларакан ансăр урампа турбазăналла пыратпăр. Ватăрах йывăçсене тӗллӗн-тӗллӗн касса янă. Çаплипех выртаççӗ-ха, тирпейлеме ӗлкӗреймен-мӗн. Вӗсем урлă каçкаласа хӳме çумнерехри тем сарлакăш тунката патне пырса тухрăмăр. (И.Егоров.)

14. Хӗр темшӗн ман ытама лекнипе килӗшесшӗн пулмарӗ. Самантлăха та. Тӳрех çӗре сиксе анчӗ, мана та хăйӗнчен хăвармарӗ. Алла-аллăн тытăнса турбаза тепӗр енчен самаях чăнкă çырана çитрӗмӗр. Аялта – шыв. (И.Егоров.)

15. Тунтикун. Чурачăкра пасар. Редактор райӗçтăвком ларăвне тухса кайрӗ. Пӗччен тунсăх. Манăн чӗре вырăнта мар ӗнтӗ. Шухăшпа пӗрре яла, тепре Шупашкара çитетӗп... Унтан каллех редакцие. (Г.Ефимов.)

16. Эх, пыраттăмăр вара çапса çăвакан çумăра хирĕç. Утма йывăр, сивĕ. Шинель аркине çил силлет, туллать. Хырсем, чăрăшсем вĕçĕмсĕр кашлаççĕ, авăнаççĕ, силленеççĕ, пĕр-пĕрин çумне тайăнаççĕ. Пĕр-пĕринпе пăшăлтатнă пек. (В.Алентей.)
17. Шап-шурă юрлă тавралăх хĕвел çутинче чаплăн йăлтăртатса выртать. Застава çурчĕ тăрринчен тумла юхать. Хаваслă, ырă. Эп хуллен уткаласа çÿретĕп. Çĕнĕ шинельпе. Атăпа. Аллăмра – винтовка. (В.Алентей.)
18. Пурнăç! Мĕн тери савăнăçлă та тунсăхлă вăл. Пурнăçра шухăшламалли, ăнланмалли мĕн тери нумай. Аслă тĕнчери ĕмĕр сÿнми пурнăçпа танлаштарас пулсан çын ĕмĕрĕ шăрпăк чĕртсе сÿнтернĕпе пĕрех. Кăшт çуталчĕ те сÿнчĕ вăл. Анчах çав кĕске ĕмĕрте мĕн-мĕн кăна курмасть-ши, тÿсмест-ши этем? (В.Алентей.)
19. Çапла вăрман тăрăх аташса çÿресен-çÿресен пĕр тунката çине канма лартăм. Йĕри-тавра тем çÿллĕш курăк. Кĕпçеленнĕ серте, упа сарри, вăрман кантăрĕ, шурут. Шухăша кайрăм. (В.Алентей.)
20. Декабрĕн юлашки кунĕсем. Çил çукпа пĕрех. Сивĕ. Урама тухсанах вăл пите çулăм пек пĕçертсе илет. Йăмрасем шап-шурă паспа хупăрланнă. Туратсем çине хитре чĕнтĕр çакса хунă пекех туйăнать. (В.Алентей.)
21. Вара куç умне каллех Чăваш çĕр-шывĕ тухатчĕ. Аякраччĕ вăл сенкер кÿлĕсен çĕр-шывĕнчен. Çамрăк каччăн унта халь тесен халь вĕçсе каяс килетчĕ. Çăлтăрсен çумĕпе, уйăх çумĕпе вĕçес килетчĕ унăн. Кăвак сĕмлĕх витĕр, тĕтрелĕх витĕр. (В.Алентей.)
22. Эсĕ кăпăшка çĕрте тем чухлĕ кăтра кăмпа ларнине курах каятăн. Пурте сарă хăмăр. Тĕксĕмленме, хуралма ĕлкĕреймен. Эппин, нумай пулмасть тухнă. Пысăкăшĕ те чăх çăмарти чухлĕ кăна. Татма васкамастăн-ха. Ăçта çухалччăр! Эсĕ пăхса йăпанасшăн. Татсассăн та ăна карçинккана тÿрех хурас килмест. Ара вăл пĕрремĕш кăмпа-çке. Вăрманăн чи малтанхи парниЙĕ! (Г.Орлов.)
23. Тимофей Иванович хăй тăрăх пăхса илет. Паян вăл çар тумĕпе. Арăмĕн арчинче çирĕм çул хушши выртнă салтак гимнастеркине, галифепе хром аттине тăхăннă. Кăкăрăн сылтăм енче Гварди значокĕ, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ.

Медалёсене шăл порошокĕпе тап-таса çутатнă. (А.Емельянов.)
24. Эсĕ пăх-ха... Эпĕ те сан пекех çамрăк çын пулса ӳснĕ. Анчах манăн хальхи пек çамрăклăх пулнă-и? Пулман. Акă эсĕ çирĕмре. Сан умра мĕн тĕрлĕ сарлака та аслă çул. Анчах ман умра çирĕмре чухне мĕн пулнă? (С.Лашман.)
25. Тамарăпа Кавруш та унта утса пычĕç.
– Улăхăр!
Малтан Тамарăна хăпартса лартрĕç. Унтан Каврушпа Карачăм иккĕшĕ те йывăç тураттисем çине улăхса утлана-утлана ларчĕç. (Д.-Чалтун.)
26. Тĕп сакайне анăпăр та миçе витре çĕр улми юлнине шутлăпăр. Çĕр улмийĕ пирĕн аптрамаллах пулманччĕ-ха кăçал. Çĕрĕ хура пирĕн. Сăпани мăнаккун – тăмлă вырăн. Лайăх кăна шутласа илĕпĕр хамăр çĕр улмисене, ытлашшине – Кипеккассине леçĕпĕр. Атя, хывăн та тĕп сакайне сик. (В.Енĕш.)
27. Халь килне кай. Эсĕ хăвăн пархатарлă ĕçне вĕçленĕ. Чуну хушнипе. Чун хушнă ĕç вара нихăçан та пăсăк пулмасть. Ха, эсĕ, Шăнкăрч, пĕртте пĕчĕк мар иккен! Атя, кай. Чипер çит, Шăнкăрч! (В.Енĕш.)
28. Лайăх сапсан, ачам, кашни пĕрчĕ çĕре тăрănса ларать. Сăвăс евĕр. Вара сӳрелемелли çеç юлать. Тепре ывăçласа ил-ха...
Начар! Тырра ывăçланă-ывăçламан чышку сан чул пек хытă пултăр. (В.Енĕш.)
29. ...Вăл куллен ĕçре, иртен пуçласа каçчен ура çинче. Хăйпе пĕрле çичĕ пыра тăрантарма тивет вĕт-ха унăн... Кайран пĕчĕкрен те пĕчĕк çăпата ăсталăпăр. Кулинейккă валли. Пĕр тăхтаса тăмасăр. (В.Енĕш.)
30. Кăнтăр вăхăчĕ. Хире тухнă йыш валли колхоз пăтă пĕçерттернĕ. Пăри пătти. Çынсем çырма пуçне вырнаçнă. Васкамасăр, шăкăл-шăкăл калаçса апатланаççĕ. Пăшăхнă Шăнкăрчăн апатне те çиес, шывне те ĕçес килет. (В.Енĕш.)
31. Эпĕ пĕр ĕç илсе килтĕм. Çак тимĕр патакĕнчен пуртă туса параймăн-ши? Унсăрăн нимпе вутă касма çук. Антихриссем пуртă таранччен сутса пĕтерчĕç вĕт. Çуртран хуса кăларса ячĕç. (Д.-Чалтун.)

32. – Ухмах? Ухмах мар вăл – чĕрĕ юлхав. Колхоза çырăнсан кашни кун ĕçлес пулать. Халĕ вăл ĕçлес тесен – ĕçлет, ĕçлес мар тесен – пăшалне çакать те вăрман тăрăх çапкаланса çӳрет. Унтан ыванса килет те куçĕсем шыçăниччен çывăрать. (Д.-Чалтун.)
33. Çулсем çын пурăнни-пурăнманнине кĕтсе тăмасăр сăхă кашкăр çăварне лекесрен хăраса таракан куянран та хăвăртрах мĕлтлетсе иртеççĕ иккен. Анчах пуçланать пек çулталăк - унăн хӳрине, чакакăннинчен вичĕ хут кĕскерехскерне, путлĕн курса та юлаймастăн. (Д.-Чалтун.)
34. Каялла килнĕ çĕре пӳртре çутă çукчĕ. Асăрханса чӳрече умĕнчен иртрĕм. Лида пӳлĕмĕнче чĕнтĕрлĕ карри витĕр шурă мĕлке курăнса кайнă пек туйăнчĕ – тепĕр хут пăхма хăяймарăм. Çук, мана туйăнчĕ кăна пулмалла. (В.Игнатьев.)
35. Çапах та, мĕншĕн сас-хура памасть вăл? Юри мана тарăхтарасшăн-и? Тен, инкек сиксе тухнă ун килĕнче? Тен, тата, çырас килмест унăн? Манса каймарĕ-и уйрăлнă-уйрăлманах? (В.Игнатьев.)
36. Акă вăрман хĕрри. Нимĕç салтакĕсен малти линийĕ. Траншейăсене хыр-чăрăш лăссипе çывăхран та курăнмалла мар хуплана. Бруствера çерепе витнĕ. (С. Юшков.)
37. Унта халь шурă каçсем, çавăнпа калатăп, – терĕ Ирина. - Çак шурăм пуç майлăрах вăл, анчах ун пек те мар. Эх, кайса кăтартасчĕ сана пĕрре! Леня, атя, кĕртсе яр мана, ху та кайса çывăр. Анчах тăххăрта кил вара. Килте тем шутлаççĕ ĕнтĕ ман пирки? Лекет-ха пĕрре. (В.Игнатьев.)
38. Нанил аппа – колхоз бригадирĕ. Кĕре хирĕç уйрăмах хĕрӳ вăхăт уншăн. Сĕтел çинче Нанил аппа хатĕрлесе хăварнă апат: хура çăкăр, çĕр улми, пĕр стакан сĕт. Тĕнчери чи тутлă апат. (Ю.Силэм.)
39. Ытарма çук кун. Савса, кулса пăхать хĕвел. Ăшă. Тӳлек. Çап-çутă та тап-таса урам. Çулласа тасатнă пек. Пӳрт çумĕнчи саксем, пĕренесем çинче вата-вĕтĕ ларать. Ача-пăча чупать, айкашать. (И.Моисеева.)
40. Анатра пăшалпа печĕç. Ун сассине илтсен Пăлаки аппа йĕрсе ячĕ. Пĕр сассăр. Ĕсĕклемесĕр. Хул-çурăмĕ вĕттĕн-вĕттĕн чĕтрерĕ ун. (В.Енĕш.)

41. Йăнăшмарĕ Вĕçелис. Вăл çитнĕ çĕре правлени умĕнче халăх чылайччĕ ĕнтĕ. Правлени алăкĕ умĕнче, çўллĕ картлашка çинче, Роман пиччепе районтан килнĕ уполномоченнăй тата вăл – ˙çĕнĕ председатель тăраççĕ. Председатель шупкаланнă гимнастеркăпа, галифе шалаварпа. (П.Афанасьев.)
42. Тухтар йĕри-тавра çаврăнса пăхрĕ. Никам та çук. Тухтар пир татăкĕпе çыхнă чĕркене салтрĕ. Шурă япала. Кĕпе-çке! Шап-шурă йĕтĕн çиппинчен тĕртсе çĕленĕ шурă кĕпе. Çухипе çанни вĕçне, аркине парăс çиппипе тĕрленĕ. Тĕрри калама çук чечен.(Илпек М.)
43. Пўртре çуркунне шăрши. Пирĕн сак айĕнче шăрчăк вĕçĕмсĕр чĕриклетет. Малти вар шырланĕнче карласа юхакан çурхи шыв сасси чўречерен шăппăн-шăппăн илтĕнет. (К.Чулкаç.)
44. Кĕтмен телей сиксе тухрĕ ун умне паян! Акă мĕншĕн ирех юрлас килчĕ иккен... Пултăрах! Çамрăк ан пултăр! Ун вырăнне пĕр-пĕр пысăк начальник пулса ĕçлет пулмалла вăл. Телефон номерĕсем пачĕ... Лайăх ĕç тупса парас пирки шантарчĕ. Тата епле çепĕç, культурăллă тытать хăйне... Интеллигент!.. (Л.Сачкова.)
45. Çанталăк тўлек, ăшă. Сап-сар хĕвел. Йĕри-тавра çапçутă. Хĕвел шевли шыв çинче вылять. (М.Трубина.)
46. Сăрт айккипе симĕс курăк. Симĕс курăк çийĕн такăр сукмак илемлĕн авкаланса сăрт айккипе каять. Сунара тухнă Мучар. Ав сăрт айккинче хăмăшлă çутă кўлĕсем. (М.Трубина.)
47. Лутра хăвасем шыв çинчех пуçланаççĕ. Вĕсен хыçĕнче çирĕксем, йĕлмесем. Инçех те мар – кĕпер. Çутă кăвак тĕспе сăрланă ăна. Хитрескер. (Л. Таллеров.)
48. Каллех тĕрĕслесе пăхрĕç. Хальхинче Юнна Стела Семеновна чĕрине сылтăм енче шырарĕ. Акă иккен вăл, аран-аран тăлтлатса тапать. Пациента палатăна ăсатнă хыççăн профессор çав сылтăм кăкăрта йăва çавăрнă чĕре пирки каласса кайрĕ. (В.Элпи.)

### *Тишкерӳ тумалли предложенисем*

Пианист таврара мĕн пуррине асăрхамарĕ; унăн чун хавалĕ çĕкленнипе куç шăрçисем пысăкланса, хуралса кайрĕç, вăрăм çырă çӳçĕ куç харшисем çинелле сапаланса пычĕ, хавхаланнă этемĕн ăста аллисене парăннă фортепьяно пĕрре аслати пек кĕрлерĕ, тепре кĕсле пек çепĕç янăрарĕ. (А.Артемьев.)

Эпĕ, шухăшсăр-мĕнсĕр ял шăплăхĕпе киленсе пыракансчер, хĕрарăм çине малтанласа пит тимлесех те пăхмантăр, анчах та иксĕмĕр çывăхланса пынă май темĕнле вăрттăн туйăм хĕрарăма тинкеререх пăхма хистерĕ. (Г.Ефимов.)

Унтанпа нумай çул иртнĕрен тепĕр чух Павăл авланман та пек туйăнать ĕнтĕ, Лисукĕ вара кĕске тĕлĕкре курнă çын пек çеç туйăнать. (Л.Таллеров).

Чарăнса тăнă чух капот çине пĕр шăна ларчĕ те машина хăвăрт пынă май ниепле те вĕçсе юлаймарĕ, капот çумнех лапчăнса пычĕ, шофер тарăн ланкашка тĕлĕнче тормозласан тин вăл капотран хăпăнма пултарчĕ. (Ю.Скворцов.)

Ашшĕ, ĕшенсе çитнĕскер, часах çывăрса кайрĕ, вăл вăрăммăн сывланине Куçма лайăхах илтрĕ. (Н.Петровская.)

Концерт пĕтсен Маюк клуб патĕнче чылайччен тăчĕ, вара Модест Палановăпа клубран хула хул тытса тухнине курсан шăппăн, никама систермесĕрех килелле утрĕ. (Г.Ефимов.)

Каччă çăвăнса тасалчĕ, Селиме панă тĕрĕллĕ кĕпине, çĕнĕ шăлаварĕпе пиншакне тăхăнчĕ, çиелтен тата тепĕр пиншак уртса ячĕ, каç тĕттĕмĕ çывхарсан урама тухрĕ. (Илпек М.)

Микихвер бригада çыннисем ытлашширех хĕрӳленнине туять, арçынсене аллипе суллать вăл, анчах лешсем

куҫҫсемпе Шакмакова тӑраннӑ та нимӗн те асӑрхамаҫҫӗ. (Г.Краснов.)

Актаев тӳсме ҫук ыратнипе тӑна кӗчӗ те ҫав самантрах хӑйӗн пӗтӗм шӑмшакӗ хытса ларнине, ӑна ту пек йывӑр япала пусса выртнине туйрӗ. (А.Артемьев.)

Поезд тапранса кайнӑ хыҫҫӑн ҫынсем майӗпе шӑпланма пуҫларӗҫ, мӗншӗн тесен халь тин ним тума та май килмен. (Л.Агаков.)

Хӗрупраҫӑн ӑшри туйӑмӗ ҫамрӑклах вӑй илсе аталаннӑ пулсан вӑл каччӑ уҫҫӑн калайман шухӑша та хӑйне кура тӗрӗс тӗшмӗртет. (Илпек М.)

Ут яракансем кӗпӗрленсе тӑнӑ тӗле вӑл чылай кайран, ыттисем мала тухнисене парнесем валеҫнӗ чух тин, пырса ҫитрӗ. (К.Турхан.)

Павӑл Чӗкеҫ колхоз правленийӗн членӗ пулнине аса илчӗ те, ӑна Кольцовпа Ильдеменов унта та, колхоз правленийӗнче, Чӗкеҫ кирек мӗн калана-каламан пуҫӗсене сӗлтсе килӗшнӗн туйӑнса кайрӗ. (Л.Таллеров.)

Анчах туй кӗрленӗ вӑхӑтра, иккӗмӗш кунӗнче, Виктор, хӗрӗнкӗскер, Тая енчен пынӑ каччӑсемпе ҫапӑҫса кайни ӑна хытах хуйха ӳкерчӗ. (А.Артемьев.)

Кӗтӳҫсем пулман пулсассӑн, тен, ҫак пуйӑссем те ҫӳреместчӗҫ, самолетсем те вӗҫместчӗҫ, завод-фабрикӑсем те чарӑнса ларатчӗҫ. (А.Емельянов.)

Малтанласа вӑл ирӗксӗр ҫеҫ, ту ӳкерчӗкӗсем питӗ кӑсӑклантарнӑ пек, енчен енне пӑхкаларӗ, кайран вара хӗр унпа пӗрле килме килӗпни хӑех нумая пӗлтернине шухӑшласа илсен кӑмӑлӗ уҫӑлса кайрӗ те – чӑнласах тискертерех илем ӑна тыткӑна илчӗ. (Ю.Скворцов.)

Пӑсланакан чаплашкасем умне ларсан, пӗчӗк кашӑкпа вӗри кофе пӑтратма тытӑнсан Лена Варлам шанчӑксӑр,

суя чунлă çын мар иккен тесе шухăшласа илчĕ. (Д.Гордеев.)

Вăл пире кайăксем ашшĕсĕр тăрса юлни, иккĕмĕш кун чĕпписем патне таврăнманни, вĕсем аптăраса çитни, çак самантра пулăшу пулмасан вĕсем вилме пултарни çинчен каласа ăнлантарчĕ. (Г.Луч.)

Амăшĕн вĕри куççулĕсем хура-шур пĕркелесе пĕтернĕ пичĕ тăрăх, çурхи пĕчĕк çырмасем çул шыраса кукăр-макăр тĕмескесем хушшинче юхнă пек, саланчĕç. (Н.Петровская.)

Чăнкă çыран тĕлĕнче выртакан пысăк чулсем хушшинче пытанса кун каçнă хыççăн, тĕттĕм пулсан, вăл маяк куралçи пурăнакан çурта пырса кĕнĕ. (М.Кипек.)

Хамăр чавса хатĕрленĕ окопсем тăшман самолечĕсене курăнмалла мар, кам ĕлкĕрет, çавăн маскировка ĕçне хушасса кĕтмесĕрех тытăнмалла. (Илпек М.)

Хĕвел пайăркисем тўррĕн ўкнĕрен çак çўçене пĕр-пĕр пысăк ăста ылтăн шывĕпе сирпĕтсе тухнă та, çав шыв кăштах типсе çитеймен пек туйăнать. (Г.Ефимов.)

Ывăлĕсене те вăл кайăка çўрес ĕçе ачаранах вĕрентнĕччĕ, анчах аслă ывăлĕпе вăталăххи граждан вăрçинче шуррисемпе çапăçса вилчĕç, кĕçĕнни вăрманта çўрессине питех юратмарĕ вара. (М.Кипек.)

Саламपи Казаковпа курса калаçас тесе ун хваттерне кĕчĕ, анчах телей пулмарĕ: Петя Пысăк Нина патне кўршĕ района кайнă иккен. (А.Артемьев.)

Ачасем чир пуснипе яслие кайман чухне вĕсене утьăкка сиктерсе ларчĕ вăл, хăйсен сĕт-турăхĕпе тăрантарса ӳсарĕ. (В.Петров.)

Вăрăм сухал ял енчи çўçе йывăççине кăтартас тесе ун еннелле çаврăннăччĕ, анчах Кент хытса тăчĕ – вăл

çывăхри вĕтлĕхрен Урасмет йăпшăнса тухнине асăрхарĕ. (К.Турхан.)

Çамрăк çын çĕлĕкне хыврĕ те вырăн çинчи хĕрача çине куç ывăтрĕ, хальхинче вăл пĕр çирĕм ик-çирĕм виç çулсенчи каччă пулни курăнчĕ. (Ю.Скворцов.)

Ку утияла Клава Аркадий салтакран таврăнсан туй пуласса ĕмĕтленсе Хусантанах илсе таврăннăччĕ. (Н.Петровская.)

Вăл, ман еннелле çурăмпа тăраканскер, каялла вăрт çаврăнчĕ те, эпĕ тĕлĕнсе хытсах кайрăм: ман умра хам çирĕм çул каялла тĕл пулнă «вăрман пики», вун пилĕк çулхи Тамаркка, тăра парать. (А.Артемьев.)

Пӳрт умне çитеспе купăс сасси каллех шăпланчĕ, урамра такам мăкăртатса калаçни, кулни илтĕнчĕ, унтан чӳрече янахĕ çумĕнчех тем кăштăртатрĕ те, кантăк карри урлă, тул енчен, этем пуçĕ курăнчĕ.(А.Артемьев.)

Экзамента вăл сасартăках пăлхана пуçларĕ, аудиторие ректор кĕрсе ларсан, Салампи пушшех пăлханма тытăнчĕ; хăй каламалли ыйтусене хут çине çырнă чух унăн алли тарласа кайрĕ, чĕтре пуçларĕ, сас паллисем кукăр-макăр пулса пĕтрĕç.(А.Артемьев.)

Салампие ку питĕ тарăхтарчĕ, анчах пуринчен ытла ăна Саланов хĕрсе кайса тавлашни тĕлĕнтерчĕ: çак пахчаçă, хăйĕн ĕçĕшĕн пĕтĕм чунне параканскер, нихçан та литературăна е искусствăна çав териех юратман пуль тесе шутланăччĕ хĕр.(А.Артемьев.)

Чăваш хĕрарăмĕ кăштах канма май килсен те, пуçне çытар çине хума кăна ĕлкĕрет – шурăмпуç килнине сиссе вырăн çинчен сиксе тăрать, каллех ĕмĕр тăршшĕпе аларан кайми ĕçе тытăнать. (Н.Мранькка.)

Харпăр хăй тĕллĕн тишкермелли ăслăлăх ĕçĕсем

1. Алексеев А.А. Порядок расположения компонентов в определительных словосочетаниях чувашского языка // УЗ ЧНИИ. – Вып. 39. – Чебоксары, 1969. – С. 223–230.

2. Алексеев А.А. Именные определительные словосочетания в современном чувашском языке // Чувашский язык, литература и фольклор. -Вып. 1. – Чебоксары, 1972. – С. 261_280.

3. Андреев И.А. Два типа безличных предложений в чувашском языке // Вопросы чувашского языка и литературы // УЗ ЧНИИ – Вып. 18. –Чебоксары, 1958.–3–32 с.

3. Андреев И.А. Структура именных синтагм в чувашском языке // УЗ ЧНИИ. – Вып. 39. – Чебоксары, 1969. – С. 78–105.

4. Андреев И.А. Порядок слов в чувашском языке // УЗ ЧНИИ. – Вып. 49. – Чебоксары, 1970. – С. 3–28.

5. Андреев И.А. К вопросу об обособлении членов предложения // УЗ ЧНИИ. – Вып. 49. – Чебоксары, 1970. – С. 115–136.

6. Андреев И.А. Об одной синтаксической особенности деепричастия на -са/-се/ // УЗ ЧНИИ. – Вып. 27. – Чебоксары, 1964. – С. 161–176.

7. Андреев И.А. Пăхăнуллă союзсен синтаксисри вырăнĕ çинчен // УЗ ЧНИИ. – Чебоксары, 1964. – Вып. 27. – С. 177–189.

8. Андреев И.А. Вăхăта пĕлтерекен пăхăнуллă предложениллĕ пăхăнуллă хутлă предложенисем // УЗ ЧНИИ. – Вып. 21. – Чебоксары, 1962. – С. 155–178.

10. Виноградов Ю.М. Признаки косвенной речи в современном чувашском языке // Сб. ст. ЧНИИ. – Чебоксары, 1974. – Вып. 4. – С. 75–95.

11. Виноградов Ю.М. Пайăр мар тӳрĕ пуплев //Чăваш илемлĕ литертура чĕлхи // ЧНТИ// Статьясен пуххи. – Шупашкар, 1978. – С. 111–123.

12. Виноградов Ю.М. Порядок слов в конструкциях с прямой речью в современном чувашском литературном языке // Чувашский язык и литература // Труды ЧНИИ. – Вып. 59. – Чебоксары, 1975. – С. 114–122.

13. Доброва Н.В. Предложенири шухăш тĕшши тата ăна уйăрмалли ятарлă татăксем // Чăваш филологийĕпе культури. – Шупашкар, 1998. – 17–18 с.

14. Доброва Н.В. Татӑксем предложенин шухӑш пайӗсене уйӑрни // Словесность в школе. – Чебоксары, 1998. – С. 59–65.

15. Долгова А.П. Ыйту татӑкӗсемпе усӑ курассин уйрӑмлӑхӗсем // Чӑваш чӗлхе пӗлӗвӗ. – Шупашкар, 1999. – 21–33 с.

16. Долгова А.П. Ыйтуллӑ предложени интонацийӗн хӑш-пӗр уйрӑмлӑхӗсем // Словесность в школе. – Чебоксары, 1998. – С. 70–74.

17. Емельянова А.В. Предложени – шухӑшлавпа хутшӑну единици // Халӑх шкулӗ. – 1999. – 1№. – 63–68 с.

18. Павлов И.П. О сложноподчиненных предложениях с частицей те в чувашском языке // УЗ ЧНИИ. – Вып. 34. – Чебоксары, 1967. – С. 145–152.

19. Павлов И.П. Чӑваш чӗлхинчи -тӑк/-тӗк/ татӑклӑ конструкцисем // УЗ ЧНИИ. – Вып. 26. – Шупашкар, 1963. – С. 66–81.

20. Павлов И.П. Чӑваш чӗлхинче хирӗҫлев союзӗсем пулса кайни тата вӗсемпе сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисече усӑ курни // УЗ ЧНИИ. – Вып. 49. – Чебоксары, 1970. – С. 47–61. Малалли // Чувашский язык, литература и фольклор. – Вып. I. – Чебоксары, 1972. С. 94–111.

21. Павлов И.П. Особенности употребления слова тесе в чувашском языке // Вопросы чувашского языка и литературы и искусства. – Чебоксары, 1960. – С. 26–40.

22. Павлов И.П. Хуть /хӑть/ союзпа ҫыхӑнакан пӑхӑнуллӑ предложенисем ҫинчен // УЗ ЧНИИ. – Вып. 37. – Чебоксары, 1966. – С. 141–151.

23. Павлов И.П. Союзы пулсан та, пулин те в сложноподчиненных предложениях с придаточными уступительными в чувашском языке // Вопросы русской и чувашской филологии (ЧГУ). – Вып. I. – С.230–238.

24. Павлов И.П. О двух типах деепричастных конструкций в чувашском языке (к вопросу о придаточном предложении) // УЗ ЧНИИ. – Вып. 12. – Чебоксары, 1955.

25. Павлов И.П. Чӑваш чӗлхинчи -и, -ши татӑксемпе ҫыхӑнса пулнӑ пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенисем // УЗ Кировского госпединститута. – Вып. 26. – Чебоксары, 1965.- С. 71–94.

26. Павлов И.П. Придаточные предложения с союзом пулсан // УЗ ЧНИИ. – Вып. 16. – Чебоксары, 1958. – С. 294–313.

27. Павлов И.П. О сложноподчиненном предложении с придаточным цели и условия в чувашском языке // УЗ ЧНИИ. – Вып. 28. – Чебоксары, 1965. – С. 121–129.

28. Павлов И.П. Сложноподчиненные предложения с союзом мĕншĕн тесен в чувашском языке // Вопросы чувашской филологии. – Чебоксары, 1974. – С. 85–115.

29. Павлов И.П. Об изафетных конструкциях в современном чувашском языке // Материалы научной сессии ЧНИИ. Проблемы словосочетаний в тюркских языках. – Чебоксары, 1975. – С. 16–19.

30. Павлов И.П. Япала ятне вырăн тата вăхăт тăрăх ăнлантаракан определенисем çинчен // Чĕлхене нормăлас ыйтусем. – Шупашкар, 1985. – 22–44 с.

31. Резюков Н.А. К вопросу о сложноподчиненных предложениях в чувашском языке // УЗ ЧНИИ. – Вып. 14. – Чебоксары, 1956. – С. 117–142.

32. Чернов М.Ф. К вопросу о сущности сложноподчиненного предложения в чувашском языке // Вестник чувашской национальной академии. – Чебоксары, 1994. – №2. – С. 48–62.

33. Чернов М.Ф. Предложенин уйрăмтăран кĕçĕн членĕсем// Чăваш республикин ăслăхпа ӳнер науки академи хыпарĕсем. – Шупашкар, 1997. – 1№. – 127–147.

34. Чернов М.Ф. Хальхи чăваш чĕлхи. Сăмах майлашăвĕнчи грамматика çыхăнăвĕн мелĕсем. – Шупашкар, 2001. – 104 с.

## Пĕлĕве тĕрĕслемелли тестсем

## I. Панă сăмах майлашăвĕн хăш схеми тĕрĕс?

1 2 3 4 5

1. *Тĕтререн уçăлса çитмен çÿллĕ тусем*




1 2 3 4 5

2. *Инçетри хулара вĕренекен кĕçĕн хĕрĕ*




1 2 3 4 5

3. *Çырма хĕрринчи чул çурт стени*




1 2 3 4 5

4. *Шурă тăмпа шуратнă пÿрт умĕ*



1 2 3 4 5

5. *Хырлăхри кăвак мăклă ансăр уçланкă*



1 2 3 4 5

6. *Çак паркри шĕвĕр папкаллă курăксем*



1 2 3 4 5

7. *Тĕттĕм тӳпери уйăхăн шупка çути*



1 2 3 4 5

8. *Ту хуштине хĕсĕннĕ шыв аврĕсем*



## II. Панă хутсăр предложенин хăш схеми тĕрĕс?

1 2 3 4 5 6 7

*1.Сайра хутра чăнкă çырантан хăйăр юхса анать.*

1) 

2) 

3) 

4) 

1 2 3 4 5 6 7

*2.Пуç урлă кураксен шавлă ушкăнĕ вĕçсе иртрĕ.*

1) 

2) 

3) 

4) 

1 2 3 4 5 6 7

*3.Хĕвелпе вĕриленсе кайнă сывлăша варкăш çил уçăлтарать.*

1) 

2) 

3) 

4) 

1 2 3 4 5 6 7 8

*4. Сĕлĕ пĕрчи пек йăпăлтăк пулăсем шывран сиксе тухаççĕ.*

1) 

2) 

3) 

4) 

1 2 3 4 5 6

**5. Кураксен пысăк ушкăнĕ хăмăл çийĕн явăнать.**

1) 

3) 




1 2 3 4 5 6 7

*6. Темиçе тĕлте кăвак çăра тĕтĕм явăнса мăкăрланать.*




1 2 3 4 5 6 7

*7. Кăнтăрлахи янăравлă сасăсем каçхи лăпкă сасăсемпе улшăнаççĕ.*




III. Хутлă предложенири хутсăр предложенисем пĕр-пĕрипе мĕнле мелпе çыхăннă?

***1. Тĕкĕр çинче шăвакан тулти тĕнче çине пăхса ларнă май пуйăс хӳри текех сулнăка кайса пынă пек туйăнать ăна.***

1) Союз
2) Хыҫ сӑмах
3) Интонаци
4) Выранӗ-йӗрки

*2.Уйӑхӑн шупка ҫути ҫулӑҫсем хушшипе чӗнтӗрленсе ҫӗре сӑрхӑннине курсан тин кӑшт лӑпланнӑ пек пулчӗ вӑл.*

1) Хыҫ сӑмах
2) Аффикс
3) Выранӗ-йӗрки
4) Интонаци

*3.Пӳлӗме кӗрсен вӑл тикӗс мар кантӑкран сӑрхӑнакан уйӑх ҫути стена ҫине ӳкернӗ ылтӑн ҫип сӗвемӗ пек йӗрсем ҫине пӑхса тенкел ҫине ларчӗ.*

1) Интонаци
2) Хыҫ сӑмах
3) Выранӗ-йӗрки
4) Аффикс

4.Ту хушшинче, хӗсӗннӗ шыв авӑрӗсем ҫинче, выранӑн-выранӑн шур кӑпӑк арман чулӗ пек ҫаврӑнса тӑрать, тӗл-тӗл, хӗсӗк ҫӗрте, тӗрлӗ тӗслӗ чулсем пӗр-пӗринпе ҫапӑнса юрлаҫҫӗ.

1) Выранӗ-йӗрки
2) Хыҫ сӑмах
3) Интонаци
4) Аффикс

*5.Хулана ҫитсе кӗрес чух тин вӑл шӑнса кайнине туйрӗ те ҫийӗнче пиншак ҫуккине асӑрхарӗ.*

1) Союз
2) Аффикс
3) Хыҫ сӑмах
4) Выранӗ-йӗрки

*6.Вара чун кӳтсе килнипе эпӗ Кольӑран вӑрттӑн вокзал хыҫӗнче карта ҫумне таянса макӑртӑм.*

1) Хыҫ сӑмах
2) Интонаци
3) Аффикс
4) Выранӗ – йӗрки

*7.Сывлӑмпа йӗпеннӗ жасмин чечекӗсем паян ырӑ ҫан – талӑк пуласса сиссе, пыл хурчӗсене чӑтӑмсӑррӑн кӗтсе, килес ырлӑха халех туйса тӑнӑ евӗр телейлӗ ҫӳҫенӳпе чӗтренсе илеҫҫӗ.*

1) Хыҫ сӑмах
2) Аффикс
3) Вырӑнӗ – йӗрки
4) Интонаци

*8.Йытӑ нӑйкӑша – нӑйкӑша автобус тавра кускаларӗ, автобус хускалсан та чупса пӑхрӗ, анчах хирӗҫ килекен машинӑсенчен хӑраса айккинелле пӑрӑнчӗ.*

1) Союз
2) Интонаци
3) Аффикс
4) Хыҫ сӑмах

*9. Венир, ӑшӑ ҫӗрте юлхавланса, куҫ умне килсе ларнӑ шӑна темӗнле слон пек курӑнса кайнинчен тӗлӗнсе пӗр хушӑ тапранмасӑрах выртрӗ.*

1) Хыҫ сӑмах
2) Интонаци
3) Союз
4) Аффикс

**IY. Хутлӑ предложенин хӑш схеми тӗрӗс?**

1. *Парӑхвиш тарӑхса калаҫса пынӑ май вӗсем юмахри ҫамрӑк улӑп юриех ашкӑнса йӗркесӗр купаланӑ пек акӑш-макӑш чулсем хушшине кӗрсе кайрӗҫ.*

1) 

3) 

2) 

4) 

2. *Шкулта вӗренӳ пуҫланиччен Ольга Петровна кашни киле кӗрсе кӑҫал шкула миҫе ача пухӑнассине пӗлчӗ.*

1)  3) 

2)  4) 

3. *Вăхăт çитсен, карта хыçне тухса тăрăнтарса лартнă улмуççи чечек çурнă евĕр, пурин куçне те курăнмалла хĕр пулса тăнă Укка.*

1)  3) 

2)  4) 

4. *Мала тухас шанчăк пĕтнĕ пулсан та вĕсем юлашки тĕл пулусем мĕнле вĕçленессе кĕтсе кунтах уткаласа çӳреççĕ-ха.*

1)  3) 

2)  4) 

5. *Касса янă йывăç хăйне нимĕнле сиен тумарĕ пулсан та Макаç çак йӳçлĕхрен Çтаппан пырса пулăшмасăр тухаймарĕ.*

1)  3) 

2)  4) 

*6. Варанса кайсанах вăл çынсем кисренсе пыракан вагон шавне хуплас пек хыттăн калаçнине илтрĕ, сак вĕçĕнче ватă кондуктор тĕлĕрсе ларнине курчĕ.*

1) 


3) 


2) 


4) 


*7. Вагон коридорĕ тăрăх унталла – кунталла пăхса утса пынă май вĕсем Илюк ларакан купе пушах иккенне курчĕç те тӳрех унталла пăрăнса кĕчĕç.*

1) 


3) 


2) 


4) 


*8. Хăй кăмăллакан çыннăн ĕçĕсем ăнса пыни çамрăк Ульянова питĕ савăнтарчĕ.*

1) 


3) 


2) 


4) 


**Y. Предложенири чарăну паллине мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

*1. Вăрăм çÿç пек усăнакан туратлă çирĕксем пуçĕсене уснă, Çирĕклĕх шывне хупласах хунă.*

1) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене запятойпа уйăрмалла.

2) Союзсăр хутлă предложени пайĕсем пĕр евĕрлĕ ĕçсене е пулăмсене сăнланă чух вĕсене запятойпа уйăрмалла.

3) Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсене запятойпа уйăрмалла.

4) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăрмалла.

*2. Çапă купи айĕнче вăрман шăшийĕ чупкалать, ахăртнех, хăйĕн йăвине йĕкел пухать пулĕ.*

1) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

2) Кÿртĕм сăмахсене сказуемăй умĕн тăнă чух предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ.

3) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене е вĕсен ушкăнĕсене запятойпа уйăраççĕ.

4) Хутлă предложенин союзсăр çыхăнакан пайĕсем хушшине запятой лартаççĕ.

*3. Тÿпелешÿ пуçланса кайрĕ те, Лисук инкĕшĕсемпе пĕрле кил хушшине пырса ларчĕ.*

1) Пĕр йышши членсене запятой лартса уйăраççĕ.

2) Союзсăр хутлă предложени пайĕсене запятой лартса уйăраççĕ.

3) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ.

4) Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем хушшине запятой лартаççĕ.

*4. Çуркунне, çĕмĕртсем çеçкене ларсан, тĕл пулнăччĕ вĕсем.*

1) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене пĕрпĕринчен запятой лартса уйăраççĕ.

2) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

3) Кӳртӗм сӑмахсене сказуемӑй умӗн тӑнӑ чух предложенири ытти сӑмахсенчен запятойпа уйӑраççӗ.

4) Сӑмах тӗп предложенин тытӑмне кӗнине кӑтартма ӑна запятой лартса уйӑраççӗ.

*5. Çулла, ачасем çум çумлама тухсан пахча янӑраса çеç тӑрать.*

1) Союзсӑр çыхӑннӑ пӗр йышши членсене пӗр-пӗринчен запятой лартса уйӑраççӗ.

2) Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑраççӗ.

3) Кӳртӗм сӑмахсене сказуемӑй умӗн тӑнӑ чух предложенири ытти сӑмахсенчен запятойпа уйӑраççӗ.

4) Сӑмах тӗп предложенин тытӑмне кӗнине кӑтартма ӑна запятой лартса уйӑраççӗ.

*6. Ачаш юмансене, ахӑртнех, çеçен хирти çум курӑкӗсем чӑрмантараççӗ пулӗ.*

1) Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑраççӗ.

2) Кӳртӗм сӑмахсене сказуемӑй умӗн тӑнӑ чух предложенири ытти сӑмахсенчен запятойпа уйӑраççӗ.

3) Союзсӑр çыхӑннӑ пӗр йышши членсене е вӗсен ушкӑнӗсене запятойпа уйӑраççӗ.

4) Хутлӑ предложенин союзсӑр çыхӑнакан пайӗсем хушшине запятой лартаççӗ.

*7. Кил хушши шӑлакан хӗр вара, пӗр вырӑнта хытса тӑнӑскер, чӑматанне ывӑннӑ пек çапкалантарса кайнӑ çӗнӗ турист хыççӑн питӗ сӑнаса пӑхса юлчӗ.*

1) Кӳртӗм сӑмахсене сказуемӑй умӗн тӑнӑ чух предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑраççӗ.

2) Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑраççӗ.

3) Союзсӑр çыхӑннӑ пӗр йышши членсене е вӗсен ушкӑнӗсене запятой лартса уйӑраççӗ.

4) Союзсӑр хутлӑ предложени пайӗсене запятой лартса уйӑраççӗ.

*8. Больницине вара хулари пекех капмар туса лартнă та, йăли-йĕрки те унтинчен нимпе те уйрăлса тăмасть пулмалла.*

1) Союзсăр хутлă предложени пайĕсене запятойпа уйăрмалла.

2) Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсене запятойпа уйăрмалла.

3) Пĕр йышши членсем пĕр вăхăтри ĕçсене е пулăмсене сăнланă чух вĕсене запятойпа уйăрмалла.

4) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăрмалла.

*9. Урамра, халăх пухăнса тăнă вырăнта, сасартăк хыттăн шавлама пуçларĕç.*

1) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене пĕрпĕринчен запятой лартса уйăраççĕ.

2) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

3) Кӳртĕм сăмахсене сказуемăй умĕн тăнă чух предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ.

4) Сăмах тĕп предложенин тытăмне кĕнине кăтартма уйăна запятой лартса уйăраççĕ.

*10. Ĕнер çеç çил аслатиллĕ çумăр пĕлĕчĕсене пăтратнă, кайăк кĕтĕвĕсене хăваланă, чечекри садсен шăрпине çурхи пывсем çине иле-иле сапнă.*

1) Хутлă предложенин союзсăр çыхăнакан пайĕсем хисеплев интонацийĕпе пĕрлешнĕ чухне вĕсем хушшине запятой лартмалла.

2) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене е вĕсен ушкăнĕсене запятойпа уйăрмалла.

3) Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсене запятойпа уйăрмалла.

4) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăрмалла.

*11. Хăвăл йĕри-таврашĕнчи йывăç хуппи тăсăлса çĕкленнĕ пек пулчĕ, урăхла каласан, хăвăл тутине тăсрĕ.*

1) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

2) Кӳртӗм сӑмахсене сказуемӑй умӗн тӑнӑ чух предложенири ытти сӑмахсенчен запятойпа уйӑраççӗ.

3) Союзсӑр çыхӑннӑ пӗр йышши членсене е вӗсен ушкӑнӗсене запятойпа уйӑраççӗ.

4) Хутлӑ предложенин союзсӑр çыхӑнакан пайӗсем хушшине запятой лартаççӗ.

*12. Тепӗр енче пӗр кӗтӳ пӗлӗт, шултра сурӑхсем пек, ту тӑрринелле чупать те икӗ еннелле уйрӑлса каять.*

1) Кӳртӗм сӑмахсене сказуемӑй умӗн тӑнӑ чух предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑраççӗ.

2) Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑраççӗ.

3) Союзсӑр çыхӑннӑ пӗр йышши членсене е вӗсен ушкӑнӗсене запятой лартса уйӑраççӗ.

4) Союзсӑр хутлӑ предложени пайӗсене запятой лартса уйӑраççӗ.

*13. Унта туратсемпе хулӑсем пӗр-пӗрипе çыхланса ларнӑ та, чупса пырса тӑрӑнсан та шӑтарса тухаймастӑн.*

1) Союзсӑр хутлӑ предложени пайӗсене запятойпа уйӑрмалла.

2) Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсене запятойпа уйӑрмалла.

3) Пӗр йышши членсем пӗр вӑхӑтри ӗçсене е пулӑмсене сӑнланӑ чух вӗсене запятойпа уйӑрмалла.

4) Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятойпа уйӑрмалла.

*14. Тырӑ вырнӑ чух, аслисем канма ларсан эпир ачасемпе çырма хӗррине чупса кайса шыва кӗреттӗмӗр.*

1) Союзсӑр çыхӑннӑ пӗр йышши членсене пӗр-пӗринчен запятой лартса уйӑраççӗ.

2) Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑраççӗ.

3) Кӳртӗм сӑмахсене сказуемӑй умӗн тӑнӑ чух предложенири ытти сӑмахсенчен запятойпа уйӑраççӗ.

4) Сӑмах е сӑмахсен пӗрлешӗвӗ тӗп предложенин тытӑмне кӗнине кӑтартма ӑна запятой лартса уйӑраççӗ.

*15. Эльвира ҫинҫешке пӳрнисемпе куҫне шӑлса илет, пичӗ ҫинче вӗлтӗртетекен ҫӳҫ пайӑркинс хӑлхи хушшине хӗстерет.*

1) Хутлӑ предложенин союзсӑр ҫыхӑнакан пайӗсем хисеплев интонацийӗпе пӗрлешнӗ чухне вӗсем хушшине запятой лартмалла.

2) Союзсӑр ҫыхӑннӑ пӗр йышши членсене е вӗсен ушкӑнӗсене запятойпа уйӑрмалла.

3) Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсене запятойпа уйӑрмалла.

4) Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑрмалла.

*16. Хирӗҫ пӑхса ларакан каччӑн куҫӗ, чӑн та, куллен тӗл пулакан йышши мар.*

1) Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

2) Кӳртӗм сӑмахсене сказуемӑй умӗн тӑнӑ чух запятойпа уйӑраҫҫӗ.

3) Союзсӑр ҫыхӑннӑ пӗр йышши членсене е вӗсен ушкӑнӗсене запятойпа уйӑраҫҫӗ.

4) Хутлӑ предложенин союзсӑр ҫыхӑнакан пайӗсем хушшине запятой лартаҫҫӗ.

*17. Пӗлтӗр Зинови, Хусанти медицина институтӗнче вӗренекенскер, практикӑра пӗр чӑваш ялӗнчи больницӑра пулнӑччӗ.*

1) Кӳртӗм сӑмахсене сказуемӑй умӗн тӑнӑ чух предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

2) Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

3) Союзсӑр ҫыхӑннӑ пӗр йышши членсене е вӗсен ушкӑнӗсене запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

4) Союзсӑр хутлӑ предложени пайӗсене запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

*18. Таҫтан тури касри йӑмрасем айӗнчен юрӑ вӗҫсе килчӗ те, анат касри улаха чун кӗчӗ.*

1) Пӗр йышши членсене запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

2) Союзсăр хутлă предложени пайĕсене запятой лартса уйăраççĕ.

3) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ.

4) Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем хушшине запятой лартаççĕ.

**YI. Панă предложенири икĕ точкăна мĕнле правилăна пăхăнса лартнă?**

*1. Шурăмпуç кайăкĕ чăрăш тăрринче юрă юрлать: вăл пĕр куçĕпе каçхи шурăмпуçа пăхса ăсатать, теприн-пе ирхи шурăмпуçа кĕтсе илет.*

1) Пĕр йышши членсем умĕнхи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

2) Союзсăр хутлă предложенири хыççăнхи хутсăр предложени умĕнхине ăнлантарнă чух вĕсем хушшине икĕ точка лартаççĕ.

3) Пĕр йышши членсен ретĕнчи умĕнхин пĕлтерĕшне хыççăнхисем ăнлантарса панă чухне ăнлантараканнисем умĕн икĕ точка лартаççĕ.

4) Тӳрĕ пуплев умĕн тăракан автор сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

*2. Саламли хăйĕн телейне, савăнăçне çынсенчен пытараймарĕ: унăн тулли кăвак куçĕсенче, пушшех илемленсе, çуталса кайнă сăнĕнче пысăк, хĕрӳллĕ туйăм ялкăшса илчĕ.*

1) Пĕр йышши членсем умĕнхи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

2) Союзсăр хутлă предложенири хыççăнхи хутсăр предложени умĕнхине ăнлантарнă чух вĕсем хушшине икĕ точка лартаççĕ.

3) Пĕр йышши членсен ретĕнчи умĕнхин пĕлтерĕшне хыççăнхисем ăнлантарса панă чухне ăнлантараканнисем умĕн икĕ точка лартаççĕ.

4) Тӳрĕ пуплев умĕн тăракан автор сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

*3. Хĕвелпе пӳрĕк чунсăр чулра та пурнăç вăратнă: ăçта килчĕ уйта кĕç-вĕç ӳкесле çырантан çаклапса лăска пуçĕсене чикнĕ тĕмĕсем усăнаççĕ.*

1) Пĕр йышши членсем умĕнхи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

2) Союзсăр хутлă предложенири хыççăнхи хутсăр предложени умĕнхине ăнлантарнă чух вĕсем хушшине икĕ точка лартаççĕ.

3) Пĕр йышши членсен ретĕнчи умĕнхин пĕлтерĕшне хыççăнхисем ăнлантарса панă чухне ăнлантараканнисем умĕн икĕ точка лартаççĕ.

4) Тӳрĕ пуплев умĕн тăракан автор сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

***4. Сăрталла кăштах хăпарсассăн эпĕ аялалла тепĕр хут çаврăнса пăхрăм: умра, сĕвек тӳремĕнче, хитре-хитре пысăк кавир сарăлса выртать.***

1) Пĕр йышши членсем умĕнхи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

2) Союзсăр хутлă предложенири хыççăнхи хутсăр предложени умĕнхине ăнлантарнă чух вĕсем хушшине икĕ точка лартаççĕ.

3) Пĕр йышши членсен ретĕнчи умĕнхин пĕлтерĕшне хыççăнхисем ăнлантарса панă чухне ăнлантараканнисем умĕн икĕ точка лартаççĕ.

4) Тӳрĕ пуплев умĕн тăракан автор сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

## Тестсен хуравёсем

| №№ | I | II | III | IY | Y | YI |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 2 | 2 | 2 | 1 | 2 |
| 2 | 4 | 4 | 2 | 3 | 2 | 2 |
| 3 | 1 | 1 | 3 | 3 | 4 | 2 |
| 4 | 3 | 2 | 3 | 3 | 4 | 2 |
| 5 | 1 | 1 | 2 | 2 | 4 | |
| 6 | 1 | 4 | 3 | 4 | 2 | |
| 7 | 4 | 3 | 2 | 3 | 2 | |
| 8 | 4 | | 3 | 2 | 2 | |
| 9 | | | 4 | | 4 | |
| 10 | | | | | 2 | |
| 11 | | | | | 2 | |
| 12 | | | | | 2 | |
| 13 | | | | | 2 | |
| 14 | | | | | 4 | |
| 15 | | | | | 2 | |
| 16 | | | | | 2 | |
| 17 | | | | | 2 | |
| 18 | | | | | 4 | |

Тупмалли

Умĕн калани............................................................................3

Чăваш синтаксисĕн тĕп единицисем.................................4

Тĕрĕслев ĕçĕ çырмалли ыйтусем......................................35

Тишкерӳ тумалли текстсем..................................................49

Тишкерӳ тумалли предложенисем...................................55

Харпăр хăй тĕллĕн тишкермелли ăслăлăх ĕçĕсем......59

Пĕлĕве тĕрĕслемелли тестсем.............................................62

Тестсен хуравĕсем..................................................................78

Учебное издание

Андреева Евдокия Александровна

Современный чувашский язык. Синтаксис

Учебно-методическое пособие

Редактор А.Е. Горшков

Подписано в печать 24. 11. 2005г.
Формат 60х8/16. Печать оперативная. Бумага писчая.
Усл. печ. л. 4,2. Тираж 100 экз. Заказ № 1066.

ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38

Отпечатано на участке оперативной полиграфии ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К.Маркса, 38

БИБЛИОТЕКА
Сергеева Леонида Павловича
№